Л25
4-37432

Николай ЛАРИОНОВ



# ЧӖРЕ ТАПНӐ ЧУХ

Национальная библиотека ЧР
4-037432

Издательство
“Симбирская книга”
1998 г.

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока



КС(Чув)
Л25

Николай ЛАРИОНОВ

# Чĕре тапнă чух

Сăвăсем, юптарусем, халăх сăмахлăхĕ, юморескăсем

Ульяновск

К84.09(2Чув)6-5-37
Обязат. экз.

ББК 84 Р6
Л 25

**ЛАРИОНОВ Н.**

**Л 25** **"Чĕре тапнă чух"**. Сăвăсем, юморескăсем.— Ульяновск: "Чĕмпĕр кĕнеки". ("Канаш" библиотеки", 3 кăларăм). 1998.— с. 80.

ISBN-5-8426-0146-19

Ч- 37432
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

«Чĕре тапнă чух» — Н. Ларионовăн пĕрремĕш кĕнеки. Унта çамрăк авторăн творчество пуçламăшĕнчи сăввисемпе юморескисем кĕнĕ.

Н. Ларионов хăйĕн хайлавĕсенче тăван халăха, тăван тавралăха юратни курăнать. Çав вăхăтрах автор пурнăçри çитменлĕхсене, кăлтăксене çивĕч курать, вĕсене тӳррĕн питлет.

ISBN-5-8426-0146-19

© Н. Ларионов, 1998
© Редакция газеты "Канаш", 1998
© Художественное оформление Д. Белоусов, 1998

ПРОВЕРЕНО
29 СЕН 2017
26 10

# ПУРНĂÇ КАÇАЛĂКĔНЧЕН — ПОЭЗИ УЙНЕ

Хăй вăхăтĕнче Чăваш халăх поэтне Ухсай Яккăвне çамрăк сăвăçсем профессионала тухма васкани питĕ пăшăрхантаратчĕ. Ку вăл ăнсăртран мар ĕнтĕ. Писателе этем чунĕсен инженерĕ, теççĕ. Эппин, халăх чысне тивĕç хайлав çырас тесен чи малтан вăл пурнăçа кĕнеке урлă çех мар, сахалтан та, халăх калашле, «пĕр пăт тăвар çисе», çапла вара чун-чĕре витĕр кăларса, пĕлме тивĕç. Ку шухăш çĕнĕ мар. Ăна классиксем авалах картса палăртнă. Вырăссен чаплă поэчĕ Н. Некрасов: «Поэт пулаймăн, тен, анчах эс гражданин пулмашкăн тивĕç», - тенĕ çунатлă сăмахсене кам астумасть-ха?

Ку енĕпе илсен, Николай Ларионов тăван поэзие «ури çине ĕне пуснă хыççăн» пырса кĕчĕ темелле. Çав хушăра тăварне те самаях çиме ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ вăл.

«Тутарстан Республикинче Çĕпрел районне кĕрекен Çĕнĕ Йĕлмел ялĕнче 1961 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче çуралнă, - тесе çырать поэт хăйĕн автобиографийĕнче. - Аттепеле анне колхозниксем. 1976 çулта тăван ялта сакăр çуллă шкултан вĕренсе тухсан Кивĕ Çĕпрел ялĕнче вăтам пĕлӳ илнĕ.

Ĕç биографине Ульяновск хулинче механически заводра пуçланă, малтан станоксен операторĕ, кайран шофер пулнă. Темиçе çул иртсен тăван яла куçнă. Унта виçĕ çул хушши вăтам шкулта хуçалăх заведующинче ĕçленĕ.

1988 çулта Ульяновскри строительство маçтăрĕсен шкулне хĕрлĕ свидетельствăпа пĕтерсе тухнă, стройкăра маçтăр пулса ĕçленĕ.

1993 çулта Чулхулара вырнаçнă Пĕтĕм Раççейри автотранспорт техникумне заочно майпа пĕтерсе тухнă. Вунă çул хушши шоферта ĕçленĕ».

Вăт çапла. Çĕр çинче вăтăр икĕ çул хушши пурăнса пĕр май производствăра ĕçленĕ. Поэтшăн ку сахал мар. Ку вăхăт унăн сасси çирĕпленсе çитме те, ячĕшывĕ сарăлма та çителĕклĕ. Чăваш ачи акă çав тарана çитсе пĕр сăвă та пичетлеме ĕлкĕреймен.

Çапла. Этем кун-çулĕ ясмăк пекех. Кăпăш çĕр çине ӳксен ярапаланса ӳсет, çул хĕрринче - таптанасса кĕтсех тăр. Чăвашлăха вырăна хурсах кайман çулсенче çамрăк авторсене ӳсме çăмăлах марччĕ çав.

Николай Ларионов та сăвăсем çырма шкулта вĕреннĕ чухнех тытăннă пулнă-ха. Анчах вĕсене çынсене кăтартман. Чи малтан «гражданин пулмалли» тивĕçе тĕпе хурса ĕçленĕ.

Иртнĕ ĕмĕрте чăваш литературипе культури шăтса чечекленнĕ Чĕмпĕр — Ульяновск хулинче юлашки çулсенче çĕнĕрен тăван чĕлхепе «Канаш»

хаçат тухса тăма пуçласан, «çул хĕрринче таптаннă ясмăк пĕрчисем» тепĕр хут пуçĕсене çĕклерĕç, вĕсем хăйсен сăвви-калавĕсене редакцие илсе пыма пуçларĕç. Çав шутрах Николай Ларионов та.

Редакци штатĕнче тăнă май, хăй вăхăтĕнче манăн пурнăçра «пĕр пăт тăвар çиме» ĕлкĕрнĕ авторсемпе тӳрремĕнех тĕл пулса ĕçлеме тиврĕ. Николай Ларионов сăвви-калавĕсенче авторăн пултарулăх шайĕ калăпланса çитнине палăртма кăмăллăччĕ. Унтанпа татах чылай шыв-шур юхрĕ. Поэт çырнисем каярах Хусанти «Сăвар», Шупашкарти «Вучах», «Хыпар» хаçатсенче те пичетлеме пуçларĕç. «Канаш» хаçат лауреачĕ Н. Ларионов 1994 çулта ЧОКЦ çумĕнчи Алексей Талвир ячĕллĕ литература премине те тивĕçрĕ. 1995 çулта ăна Раççей писателĕсен союзĕн членне йышăнчĕç.

Халĕ Н. Ларионов Ульяновск хулинче пурăнать, «Канаш» хаçатра çырусен пайĕн заведующийĕнче тăрăшать. Акă пирĕн умра унăн малтанхи кĕнеки. «Чĕре тапнă чух» тесе ят панă вăл ăна. Кĕнекене тĕрлĕ çулта çырнă сăвăсемпе юптарусем, тăван ялта пухнă халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем, юморескăсем кĕнĕ.

Мĕн калама пулать-ха Николай Ларионов хайлавĕсем пирки?

Вĕсенче поэт хăйĕн сассине шыраса тупни сисĕнет. Вăл тăван тавралăхпа унăн çыннисене мухтать. Ăрусен çыхăнăвĕ те хаклă ăна. Чи пахи — ку та, вăл та автор тӳссе-курса асра юлнă сăнарсемпе ӳкерчĕксем урлă калăпланни. Поэт чĕлхи пуян, чĕрĕ. Вăл халăх пултарулăхне çывăх, сĕткенне унăн тымарĕсенчен илет. Литературăра ку чухне сайра тĕл пулакан юптару жанрĕ те шăл çемми ăна.

Калавĕсем пирки те çакнах каламалла. Вĕсен сюжечĕсем ку чухнехи пурнăçпа таччăн çыхăннăскерсем.

Николай Ларионов пурнăç каçалăкĕнчен литературăн анлă уйне тухать кăна-ха. Унта ăна, чăн-чăн чăваш хресченĕ пек, тухăçлăн ĕçлеме ырă сунас килет.

**А. ЮМАН,**
**Раççей Федераци культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ,**
**Писательсен союзĕн членĕ.**

# Чĕре тапнă чух



# Мĕн пулчĕ-ши, этем, сана?

Мĕн пулчĕ-ши, этем, тăван, сана -
Асар-писерех кайрăн пăтранса.
Мĕнле-тĕр вупăр йăтрĕ тусана -
Хăш çавраçил пăлхатрĕ çавăрса?

Курмастпăр пĕр-пĕрин йывăрлăхне,
Хаярланса пыратпăр кунсерен.
Усал-сехмет акать хăй вăрлăхне
Эпир кашни хутах вăрçмассерен.

Айккинелле утатпăр пăрăнса
Кÿрше нуша-хĕн пулнă вăхăтра.
Каланине каятпăр-çке манса:
«Инкек вăл курăнса килмест сăртран...»

Ăс-пуç лăк тулнă курайманлăхпа,
Çухатнă пурнăç ырă тĕллевне.
Вылятпăр çăмăллăн малашлăхпа.
Ăçта пырса тухатпăр? Тĕлĕнеп.

Пыратпăр пулĕ çухатса тăна,
Савăнтарать пулсассăн çын нуши,
Çын савнăçĕ кĕвĕçтерсен чуна.
Анлан, чунпа хытни - чи хăрушши!

Этем тени пулмасть пуль çакăн пек,
Е сĕрĕм тивнĕ-и кашнин пуçне?!
Чулланчĕç-ши чунсем веç тĕпĕпех,
Çимен пуль тилпĕренĕн çимĕçне?

Курайманни ан пултăр пĕр-пĕрне,
Васка, путакана пар аллуна!
Çынна ырă тумашкăн вĕренер,
Çапла тусассăн ÇЫНЛĂХ сыхланать.

Этем, хăй Турă панă ăс сана,
Çакна кая юлмасăр астусам.
Мĕнле килсе тухсан та самана -
Пур ÇЫНЛĂХНА, тархасшăн, упрасам.

## Чĕре тапнă чух

Куçăм курнă чух - сĕм суккăр пулаймастăп,
Таврара мĕскер пулать - веç ман умра.
Ешĕл улăха пăхса ытараймастăп,
Çуннă çурт курсан - салхулăх куçăмра.

Илтнĕ чух хăлха - хăлхасăр пулаймастăп,
Пулăшма васкатăп пулăшу ыйтсан.
Шăпчăк сассине илтсен - хускалаймастăп,
Çӳлелле пăхатăп аслати çапсан.

Утнă чух ура - урасăр пулаймастăп,
Кирлĕпе çитмешкĕн хатĕр таçталла.
Çук, кутăнланса тăма пултараймастăп,
Ырă ĕç тума пулсассăн - каймаллах.

Пур чухне чĕлхе - чĕлхесĕр пулаймастăп,
Хатĕр тĕрĕсне ялан эп калама.
Сӳпĕлти, суя çынна, çук, мухтаймастăп,
Ăслă этеме пултарăп хаклама.

Чунăм сывă чух - чире те хываймастăп,
Пулăшу ыйтмап шеллеттересшĕн çеç.
Нимĕн ыратмасăрах мăшт выртаймастăп,
Переймеп пăлахая эп тĕршĕнсе.

Ăсăм пур чухне - ухмах та пулаймастăп,
Шырамастăп чăнлăх чыссăр çынсенче.
Сĕм ухмах рольне те чĕмсĕр выляймастăп,
Пулаймап вылямалли çын аллинче.

Тапнă чух чĕре - чĕресĕр пулаймастăп,
Хĕрхенме пĕлетĕп вăйсăр-сусăра.
Çурăмсем хыçне пуçа пытараймастăп,
Хирĕç тăрăп усала - хушмасăрах.

## Ман шухăшсем — çунатлă акăшсем

Сивлеççĕ хăшĕсем мана, пĕлеп,
Шухăшламаншăн эпĕ вĕсем пек.
Вара мĕн-ма-ши манăн, тĕлĕнеп,
Пурăнмалла-ха çыннăн ăсĕпе?

Пурӑнмалла ҫын ӑсӗпе тесе
Ӑҫта кам ҫырнӑ? Кам каланӑ? Кам?!
... Тӑвап хамла. Сире мар тиркесе.
Эп йӑнӑшсассӑн - айӑпли те хам.

Ҫаксан та вилӗм мӑйкӑчӗ ҫине,
Ман шухӑшсем хӑпарӗҫ-ҫке пӗрле.
Ӳт-пӳ ҫинчен хывсан юлашкине,
Ман шухӑша илеймӗҫ ниепле.

Ман шухӑшсем - ҫунатлӑ акӑшсем,
Шур акӑшсен хуҫи те пулӑп хам.
Эппин, ҫилленӗҫ те-ха хӑшӗсем,
Каҫарӑр-ха... хамла эп шухӑшлам.

## Эп чухӑн-и?

Ҫын ӑмсанмашкӑн манӑн мулӑм ҫук,
Лаша лавне кӗрет пур япала.
Пуяншӑн эп, паллах-ҫке, - ӑҫтиҫук,
Анчах та эпӗ чухӑн-и? Кала.

Кив арчара укҫа пухса пыман,
Ӗненӗр, эпӗ чухӑн мар ҫапах.
Ик аллӑм ман - пӗр ӗҫ тытса тума,
Ыйткаламастӑп пысӑк хутаҫпа.

Ҫӗр айӗнче те ылтӑн усрамап,
Сиксе ӳкместӗп шарт! ҫӗр варринче.
Мула ҫаратасран та хӑрамап,
Мӗнпур пуянлӑх манӑн хам ҫинче.

Ҫук манӑн «Волга», ҫуккӑ «Мерседес»,
Ума ун пек тӗллев лартман.
Апла-тӑк ма шӑпа ӑнмарӗ тес,
Ик ывӑнма пӗлмен ура пур ман.

Мухтанаймастӑп вилла пур тесе,
Телейсӗр эп теместӗп тӑвӑлса.
Ик куҫӑма хавассӑн ҫӗклесе,
Тӳпе иленкине курап пулсан.

Ҫук непсӗ чирӗ - Турӑҫӑм, ан пар!
Тавах, ҫынна курайманни те ҫук.
Атте-анне пилленӗ пархатар
Хам ҫӑлтӑр патнелле кӑтарттӑр ҫул.

Шăнкăртатса шыв юхнине илтсен,
Пултарайсан çын хуйхине туйма,
Ик аллăм пысăк ĕçшĕн кĕçĕтсен -
Чăнах, суймастăп, эпĕ чухăн мар.

Нихçан та хапсăнман нимле мула,
Ан сӳнтĕрччĕ çеç чĕрере кăвар.
Хам халăхшăн эп усăллă пулам,
Ун пек пулсассăн - мĕскĕн, чухăн мар.

Çын ăмсанмашкăн манăн мулăм çук,
Лаша лавне кĕрет пур япала.
Пуяншăн эп пулам-ха ăçтиçук.
Ку тĕнчере эп чухăн-и? Кала...

# ТĔНЧЕ ПАТШИ

## пулма килмен

Кунта ТĔНЧЕ ПАТШИ пулма килмен,
Пухаймăн Çĕр çинчи мĕнпур мула.
Мул мĕн тума вăл? Вăл - çын тĕмсĕлме,
Çĕрсе, кăмсăкланса тăпра пулать.

Пулатпăр хамăр та хура тăпра,
Хăналăха çеç килнĕ-çке кунта.
Мĕн кирлĕ этеме çак вăхăтра?
Тус шанчăкли сан пултăр çумăнта!

Пуян та муллă пулнă тейиччен
Калаччăр: «Çук, çынна туман усал.
Пурне те пулăшнă вăй пĕтиччен...»
Чуна та çăмăл çакăн пек пулсан.

## Çурта çунать

Çурта çунать, çунать çурта,
Çунать вăл сирĕн умăрта.
Веçех çунса пĕтет тесе
Ан шеллесем, ан сӳнтерсем.

Вăл ялкăштăр, ирĕлтĕрех,
Ун вăхăчĕ иртет пĕрех.

Ун ӗҫӗ - ҫутӑ тӑвасси,
Ҫук сӳнне ҫуртара усси.

Ҫунать ҫурта, ҫурта ҫунать,
Тархасшӑн, ан сӳнтер ӑна.
Чӑмӑртаса тыт аллуна,
Инҫе кайма ҫутат умна.

## Ун чухне

Вӑл вӑхӑтра ман ҫылӑх ҫукчӗ,
Пӗр никама усал туман.
Ҫук пурнӑҫӑм та пыл та ҫуччӗ,
Мӗн ҫуккине ҫынран ыйтман.

Пӗр никама та ҫукчӗ парӑм,
Никам пӗлместчӗ эп шухне.
Ним кирлӗ марччӗ - мул та арӑм, -
Эп ҫуралманччӗ ун чухне!

Ҫуралтӑм та - умра пин парӑм.
Шух курӑнтӑм ҫын умӗнче,
Ҫылӑхсенчен сыхланаймарӑм.
Эх! Ҫылӑхлӑ эс, ку тӗнче!..

## Вӑхӑтпа сӑмах

Пулать-ха тӗрлӗрен сӑмах:
Е аванни, е начарри.
Хӑшне-пӗрне каласанах -
Пӗл, ырӑ ку е каварри.

Ҫак вӑхӑтра сӑмах йӑтать,
Савӑнтарать та вӑй парать.
Чул-тимӗре те хӑйпӑтать,
Мур-усала парӑнтарать.

Сӑмах паян вута кӗртет
Е тинӗсре те путарать.
Чи хурланни те хӗпӗртет,
Ӑна илтсен кулса ярать.

Сӑмах паян вӑл ҫурмаран
Хуҫса хурать, шар типӗтет,

Анчах ун вăйĕ, ху куран,
Паян кăна - ыран пĕтет.

Вăл мода çеç сăмах паян,
Хăват парать калаканне.
Çулсем иртсен, хăвах туян,
Лартать йăлт ВĂХĂТ вырăнне.

## Чун сивви

Тулта сĕм тĕттĕм, сивĕ,
Юпа янрать, улать.
Ик хăлхана тăм илĕ,
Ун пек те пулкалать.

Эп кĕрĕкпе пулсан та,
Ăшăнаймап нимле.
Пите веç хупласан та
Сисетĕп: тăм илет.

Сив урамра тăратăп,
Курмастăп пĕр хунар.
Ан тив-ха, ăш вăркатăр -
Ку сивĕ ним те мар.

Мана шăнтмасть ку сивĕ -
Сăлтавĕ урăхла.
Çанталăк та сисет вĕт,
Çынран вăл тăрăхлать.

Хăвăлланать çын чунĕ,
Сив çил вĕрет унран.
Е чарăннă ун юнĕ?
Çын ютшăнать çынран.

Ӳт-пӳ пулсассăн ăшă,
Шăнсах пырать-çке чун.
Тул сиввинчен хăрушă -
Çĕршер хут! - чун çук чух.

## Куçна ан хуп

Çын умĕнче нихçан та ан мухтан,
Начар, киревсĕр ĕç туман тесе.
Вара курмастăн-и, чим-ха, тăхта,
Мĕн чухлĕн пурăнаççĕ иртĕхсе?

Киревсĕр ĕç çине куçа хупни
Çак ирсĕрпе çумлăн лартать сана.
Пулать суя тасалăха путни,
Эс чармасассăн - пулăшан ăна.

Иртсе кайман-и эс - "илтмен, курман" -
Айван ху пулнипе ун пек çĕртен?
Усал тăвакана тытса чарман?
Апла пулсассăн - çылăхлă пурте.

## Тус - тăшман

Эп ăнланатăп: çын - мĕнпурĕ -
Пĕр çын шухăшĕпе килĕшнине.
Ăс пур çынна кашниех курĕ,
Апла-тăк шухăш çитнĕ кашнине.

Анчах та пач ăнланаймастăп
Пĕри кашни çын кăмăл-щухăшне
Ним чухлĕ те хирĕç тăмасть-тĕк,
Йăлт килĕшсе пырса илсен ăшне.

Ку çын хăрушă çĕленрен те,
Унпа хăлхусене чанк! тытмалла.
Тусна вĕлермелле тесен те,
Вăл тăхтамасăр килĕшет паллах.

## Çăхан

Çăткăннăн, шăтарасла пăхса,
Явăнать пуç тăрринче çăхан.
Яланах çӳрет вăл антăхса,
Пилĕ те пĕтмест вĕт, çĕр çăтман!

Сăхланса сăнать вăл чĕпсене
Кăшт пăрăнасса кил-йышĕнчен.
Пĕтĕм ĕмĕчĕ - чĕрнисене
Шалт! хупса сăхасчĕ пуçĕнчен.

Непсĕ чун, эс кăлăх кранклатан,
Кунĕн-çĕрĕн тăранмасăр выçăхан,
Шур сĕлекӳне ланк-ланк çăтан -
Сан шалчу тулать-ха, каçăхан!

## Пуш хирте

Утатăп каç та ир,
Халтан каяп пăхса.
Йĕри-тавра - пуш хир,
Каять чуна касса.

Веç хăйăр. Курăнмасть,
Пĕр вĕççĕр вĕçтерет.
Ниçта çук пăрăнма,
Куçа, пыра кĕрет.

Ĕçме шыв шыраса,
Вуçех çухатрăм çул.
Тăратăп аптраса -
Çук чĕрлĕхлĕ шыв. Çук!

Эп пулăшу ыйтап,
Тăсса тăрап алла.
Пĕтсе пырать вăй та.
Ăçта ман утмалла?..

Пĕлмеп, те каç, те ир
Тип хăйăр çийĕнче.
Йĕри-тавра - пуш хир,
Пуш хир çеç... чунсенче.

## Кĕтӳ

Тул çутăлать. Кĕтӳ ялтан
Тухать тусан парлаттарса.
Пырать кĕтӳçĕ хыçалтан,
Кив пушшипе шаплаттарса.

Çитес тесессĕн хирелле,
Шыв урлă унăн каçмалла.
Апла пулсан кĕперелле
Çак кĕтĕвĕн çул тытмалла.

Кĕтӳ тени вăл кĕтĕвех -
Кĕпер пурри те ним те мар.
Çыр чăнкине çитсен, тӳрех
Каçса каясшăн - тыт та чар!

Кĕрет вăл хĕсĕк вырăна,
Тăпăртататьтăкăрлăкра.
Ӳкеççĕ хăшĕ çырана,
Путаççĕ. Ишĕлет тăпра.

Хăшне таптаççĕ урапа,
Сиксе тухать çинçе пырши.
Лекет хăшне майракапа,
Ку хĕсĕве кам чăтĕ-ши?

Ан хĕсĕнĕр - кĕпер çумрах,
Каçас тесессĕн - пур пĕве.
Леш ен те виçĕ утăмра...
Кĕтӳ тени вăл кĕтĕвех!..

## Кашнин хăйĕн хуйхи

Çын пытараççĕ - хурлăхлă самант,
Процесси тăсăлать кĕç урама.
Хыр тупăкра патвар арçын выртать,
Пуç вĕçĕнче ун арăмĕ утать.

Пыраççĕ çавăтса ик хулĕнчен,
Куççуль тухми те пулнă куçĕнчен.
Тути те типнĕ ун йĕре-йĕре,
Никам ан куртăр çакă синкере.

Паян сĕм тĕттĕм унщăн Çут тĕнче.
Мĕнпур тĕнче халь - куçĕ умĕнче.
Сывланă май ăшран шав «ах» тухать:
«Çак йывăç тупăкран сиксе тух-ха!..»

Процесси вĕçĕнче, хыçаларах,
Лару-тăру самай урăхларах.
Утаççĕ икĕ арăм майĕпен:
«Ыран ир пасара пыратăн тен?..»

## Ватăлсан

Пĕкĕрĕлсе, туя çине тĕревленсе,
Пырать пĕр ансăр пралукпа ват карчăк.
Утать-ши ăçталла, каять-ши вăл инçе?..
Тата хыçне ак пĕр хăлаç хăварчĕ.

Утать урисене çĕр çумĕн шутарса,
Çĕре пăхса, пуçне пĕр çĕклемесĕр.
Каçалăк пек куççан, канать мăштах тăрса,
Пĕр утăм та куçма çук ĕхлетмесĕр.

Пайтах канса тăрсассăн хӳмерен тытса,
Шăвать вăл малалла. Кашни хăлаçĕ
Пит йывăр парăнать-çке ватăлсан,
Çапла çав, йывăр çыншăн пурнăç касĕ.

Пулман-ха вăйсăр çамрăк чух ку кинемей,
Вăхăтĕнче ачи-пăчи, çемйи те пулнă.
Мĕнпур ун шанчăкĕ халь - туяпа хӳме,
Чĕри ыратупа веçех лăк тулнă.

Çитес çĕре ку карчăк çитĕ-ши утса,
Мĕнле нуша ăна пӳртрен кăларнă?..
Каллех вăл сывлăш çавăрать хӳме тытса,
Хăйпе хăй калаçать, пуплет, мăнтарăн.

## Чăвашлăх йывăçĕ

Ку йывăçа асаттесемех лартнă,
Пире пилленĕ шăпчăк чĕлхине.
Хĕн-хур курсан та упраса хăварнă.
Сыхласчĕ пирĕн те авалхине.

Чăвашлăх йывăçĕ хăрса ан лартăр,
Шĕпĕлтетсе калаçчăр çулçисем.
Куллен ӳссе вăл калăпăшне сартăр,
Пĕр чарăнми кармаштăр нӳр илсе.

Чăвашлăх йывăçне шĕкĕ ан çитĕр,
Туни ун пултăр хытă, хурçă пек.
Хăвачĕ те кашнин валлиех çиттĕр,
Аталанар çак йывăç хӳттипе.

Чăвашлăх йывăçне çилсем ан хуçчăр,
Çил-тăвăлтан пĕр харăссăн сыхлар.
Сĕм пĕлĕтсем часрах пуç çийĕн куçчăр,
Ку йывăç ятăр тарăнрах тымар.

Чăвашлăх йывăçĕ - чăвашшăн хӳтлĕх,
Мĕн ачаран ăна упра, хакла.
Ун мĕнпур пайĕ имлĕ, сиплĕ,
Çак йывăç тымарне эс ан кăкла.

Чăвашлăх йывăçĕ, кашла та сарăл,
Кăлар ялан сыв хунавсем пиншер.
Тымарусем ан хăрччăр, ӳс патваррăн,
Эс - пирĕн йывăç, ĕмĕрех ешер!



ч-37432
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики

## Сăварта

Сăвар хули... Чăвашшăн эс сăваплă.
Пĕрремĕш хут килетĕп сан патна.
Шăпу сан пулнă тертлĕ те асаплă...
Аса илеп халь йывăр вăхăтна.

Асаттесен хули... Чăваш суранĕ...
Кунта халь калаçмаççĕ чăвашла.
Тăшман килсессĕн, çапăçу хуранĕ
Вĕренĕ таврара ташла-ташла.

Сыв юлнисем аяккарахах тарнă,
Тăван çĕрне хăварнă пăрахса.
Чăваш йăхне те çакă пуль хăтарнă...
Хытса тăратăп инçете пăхса.

Сăвар... Чăвашлăхăн сăпки эс пулнă...
Кунта-çке несĕлсен тымарĕсем.
Халь лăпкă Учăк шывĕпеле çумлăн
Хирте выртаççĕ крепость валĕсем.

Ӳсет ун çийĕн куракĕ сип-симĕс,
Кăвак лаша, çил пек, чупать, юртать.
Инçе историйĕмĕр - путнă кимĕ -
Пире туйса, шăп итлесе выртать.

Чăваш чĕлхи паян инçе янрарĕ
Асаттесен хули çинче. Манма
Çук, тăванах сăварĕ те пăлхарĕ,
Килетпĕр вĕсене-çке асăнма.

## Çтаппан вилĕмĕ

Вутлă та вĕри çапăçура
Малалла чупать Çтаппан-салтак.
Шухăшĕ-тĕллевĕ - Анăçра,
Илĕртет-çке Çĕнтерӳ малта.

Утăм хыççăн утăм. Шăл çыртса
Умнелле сапать тăхлан пăрçа.
Хăшĕсем юлаççĕ ак выртса.
Фашиста вăл тарăхса вăрçать:

"Пĕтереймĕр манăн халăха,
Çук хăравçă пирĕн хушăра!
Юн тăкатăр шутсăр кăлăхах,
Тĕп тăватпăр Гитлера-мура!"

Чарăнман паян ак кун каçа,
Автомат кĕпçийĕ хĕрелет.
Рота юхан шыв урлă каçать,
Юнлă шывĕ мăй таран. Кĕрлет!

Фашистсем хыт тарнине кура,
Салтаксем вăй илчĕç тепĕр хут.
Сасăпах Çтаппан та кăшкăрать:
«Халĕ Гитлер хăй пĕтет. Капут!»

Малалла - хысак. Çак сăрт çине
Харăссăн хăпарчĕç салтаксем.
Çук, никам чараймĕ вĕсене.
Ирĕлеççĕ нимĕç танкĕсем.

Чĕтрекен сас кăларса фашист,
Урнă йытă пек, çиет шăлне.
«Берлина çитсе курайăп-ши?! -
Аврлать Çтаппан хăй пăшалне.

Çавă самантра ак Çтаппана
Ансăрт пуля çапрĕ кăкăртан.
Сисеймерĕ-ха тăрук ăна,
Пĕçере пуçларĕ тем шалтан.

Çăкăнса анать салтак çĕре,
Çуннă курăк çинелле ўкет...
Курчĕ чĕркуçленнĕ Петĕре,
Леш ăна : «Çтаппан, тăр!» -тет.

«Çук, юлташăм, урăх тăрас çук.
Кĕчĕ кăкăра темскер... Шала.
Çитеймеп сана чупса ку чух,
Мансăр ўлĕм кайăр малалла.

Тусăм, сыхлаймарăм эп хама,
Каçару ыйт маншăн аннерен.
Вăрçăра кунта вĕт - кам кама:
Вĕлереççĕ е ху вĕлерен.

Маншăн мамăк пулĕ çак тăпра.
Вут çунать ăшра... Ĕçес килет...
Çĕр кисреннĕ, çуннă вăхăтра
Эсĕ хуть çитейĕнччĕ киле.

Петĕр, сывă юл. Ман хал пĕтет...
Çук, юлас килместчĕ ман кунта.
Чăтăмсăр пире ял-йыш кĕтет.
Аннене мĕн калăн-ши унта?

Ял-йыш кĕтсе илнĕ чух сире,
Ыталашнă чух тăвансемпе
Калăн: «Выртса юлчĕ ют çĕре».
Манăн чун яланах вĕсемпе.

Пурăнас килетчĕ малалла,
Тытмаллаччĕ йывăç сухапуç.
Çакăнтах ман ĕмĕр выртмалла...
Тус, каçар... ман... хупăнать... ик куç...»

## Ирĕклĕх йыхравçи

**Влад ЛИСТЬЕВА асăнса**

Кама вĕлерчĕç!!! Влад йăванчĕ -
Çĕн самана çынни - сив чул çине.
Çунат саратчĕ çеç таланчĕ,
Тискеррĕн-çке тĕп турĕç хуçине.

Вăл - демократийĕн Трибунĕ,
Ăна мĕнпур Раççей, тĕнче паллать.
Шел, пит сахал ун пулчĕ кунĕ,
Уйăрăлса ир кайрĕ Листьев Влад.

Тăвасшăн чăн-чăн демократи
Çунатчĕ вăл - хальхи пек, тĕлсĕр мар.
Пăхатчĕ умнелле - куратчĕ
Эпир курманнине, вĕри кăвар.

Тумхахлă çулĕ, вăл пĕлетчĕ,
Ума яка сĕтел çитти сарман.
Вăл çиччĕмĕш тарччен ĕçлетчĕ,
Нихçан та янтине кĕтсе ларман.

Влад пулчĕ Ирĕклĕх йыхравçи,
Çынсен куçне уçатчĕ чăнлăхпа.
Чĕркуçленмен, пулман хăравçă
Ăс-хакăлне, вăйне шаннăлăхпа.

Хăй те пĕлетчĕ: хăрнă хурăн
Тытса лараймĕ симĕс çулçине.
Вăй-халĕ пурччĕ-ха маттурăн,
Пат! татăлса вăл анчĕ çĕр çине.

Ӳксе çĕрместĕн пĕр хыпарсăр,
Шăтса ак тухĕç çĕн хунавусем.
Ху пекех пулĕç паттăр, харсăр,
Çил-тăвăлпа та авăнмĕç вĕсем.

## Шăршлă путвалта

Шав... Кăмсăк шăршлă, тĕттĕм путвалта
Йăшăлтататть пин-пин çĕлен-калта.
Пĕлместĕп, кам кунта мĕскер курать?
Кашниех хăйĕн вырăнне шырать.

Ай-ай-çке тĕттĕм! Курăнмасть ним те,
Чиксессĕн те йĕппе куçа, пите.
Çурта çутса хăй çути тăвăр-ха,
«Курмап» тесе пуçа ан таптăр-ха!

Çурта çук?! Мĕн-ха çутмалли тупас,
Ку нӳрлĕ шăтăкран мĕнле тухас?
Ак тупрăм! Ик алла ик чул тытса
Çĕклерĕм, пуç çине çӳле йăтса.

Эп сăтăрса, хĕртсе алри чула,
Ун çуттипе шыратăп хам çула.
Чул пĕçерет пулсан та ик алла -
Пăрахмăп, алăк шырăп малалла.

## Ĕç лаши

Çуралнă эсĕ ĕç лаши пулма,
Пулаймăн нимĕнле те урăхла.
Ирех - тул çутăлнă е çутăлман -
Хуçа сана кӳлсе çăварлăхлать.

Çăвать, чӳхет сив çумăр иртенпе,
Юлмашкăн ăшă витере çук ним сăлтав.
Куçараймастăн сан ĕçне тенке,
Канмасăр сĕтĕретĕн пысăк лав.

Çăратăн пылчăк чĕркуççи таран,
Шуралаймасть сан сакăлти уру.
Каç еннелле утан аран-аран,
Лачкам йĕпе-çке çурăму, ăмру.

Кĕрсе тăрсассăн хĕсĕк витене,
Пырса параççĕ улăм çĕклемпе.
Выçсассăн сĕлĕ пек вăл çиймĕнет.
Ăçтан илетĕн-ши вăйна? Мĕнпе?

Çĕр каçнă хыççăн кăштă тĕлĕрсе,-
Куç умĕнче хуçан кĕске пушши! -
Хуçа йĕвен тăхăнтарать кĕрсе.
Пĕлетĕн, вырăну - турта хушши.

## Çынна ялан çитмест

Çынсем КУНТА пурнаççĕ:
вăрçаççĕ, çапăçаççĕ,
пĕрне-пĕри кăшлаççĕ,
мĕскер-тĕр шав пайлаççĕ.
Çӳренĕ чух ялан çитмест çынна.
Пухаççĕ мул, пĕлмеççĕ виçине.
Ăçта кайма пухаççĕ? Кам пĕлет!"

Вăрçса халтан каяççĕ,
ĕçпе те ывăнаççĕ,
куççем çеç тăранмаççĕ,
юлашкинчен... выртаççĕ.
Никам кĕтмест пулсан та çак куна.
Пĕрпекленеççĕ пурте КАÇХИНЕ -
Пурне те сивĕ вилĕм тикĕслет.

## Пĕршайлăха çухатсан...

Ут утланса, çил вĕçтерсе паян çӳрен,
Çак вăхăтра сана никам та кирлĕ мар.
Ыран инкек пулсан вара выртса йĕрен,
Çăтатăн куççульпе пĕрле пĕр пăт тăвар.

Капмар кортеж ҫинче пыран мӑнаҫланса,
Ҫупаҫҫӗ алӑ, ывӑтаҫҫӗ чечексем.
Пӗршайлӑха ан ҫухатсам, ан тайӑлсам -
Кӗтеҫҫӗ таптама ҫӳлтен ҫӗре ӳксен.

Ал тӑсакан юлать, пӗр шухӑшсӑр пыран,
Паян ҫуна шӑвать хура тӑпра ҫинче.
Пӑрӑнчӑкра кӑшт сулӑнкӑ ҫапсан ыран -
Пӑхатӑн та - ху та выртан ҫул айккинче.

## Ху пек пул

Шӑпа мӗнле кун-ҫул парсан та - тӗреклен,
Тӳссе ирттер, ан ӳк, ан авӑн, чӑтӑм пух.
Мӗн пуласси - пулатех вӑл, ӑна пӗлен,
Лару-тӑру епле пулсан та - ху пек пул.

Хӑш чух чун шӑнӑрне лӑскать вӑл, тӗрӗслет
Е тинӗсри ҫил-тӑвӑл пек чӳхентерет.
Ҫусан та пӗлӗтрен хыт чул - пуҫна ҫӗкле,
Кайсассӑн ҫиле май - чышса вӑл тӳнтерет.

Паян ӑҫта аван - кашни ҫӗре ан ҫыпӑҫсам,
Енчен енне ан ыткӑн, ҫӑмӑл флюгер пек,
Тултар ҫилпе ху парӑсна хӑвах уҫса,
Пуҫна чиксе утса ан пыр ҫын йӗрӗпе.

## Пин ҫыннӑн - пин шухӑш

Пин ҫыннӑн - шухӑшӗ те пин,
Тупаймӑн пӗр шухӑшлине.
Апла хӑвах кур-ха эппин,
Мӗнле ҫын мӗн хӑтланнине.

Тӗллев лартать кашни умне
Е ачаллах, е ӑс кӗрсен.
Ҫынна пӗлес тесен камне -
Ун шухӑшне малтан пӗлсем.

Хӑшне мул ҫывӑрма памасть,
Пуянлӑх униӑн чи кирли.
Вилме выртсан та пулӑшмасть,
Паллах ку ҫын мӗнпе чирли.

Сыпать тепри эрех-сăра,
Тăрлавсăр пурнăçĕ иртет.
Тухать ку çын юрăхсăра,
Хăй мухмăрне чĕрте-чĕрте.

Чап çунтарать-çке хăш-пĕрне,
Вăл ĕмĕр уншăн тăрмăшать.
Хăй тăмасан та нимĕне -
Вĕчĕрхенет, типет, хавшать.

Курман-и эс суя çынна?
Никам чĕртеймĕ ун чирне.
Вăл улталать тăрса çумна,
Сĕвет тытман упа тирне.

Çынран куласшăн çеç тепри,
Кушак пуласшăн, эс - çерçи.
Шӳтлевçĕ çакă тетĕр-и?
Шӳтлевçĕ мар вăл - ирсĕр çын.

Наянлăх чирĕ лапăрах
Кахал çынна пусса хурать.
Ĕçрен тарать аяккарах,
Вутран хăранă пек хăрать.

Тепри хурать мăна хăйне,
Çынна куç айĕн çеç пăхать.
Çӳле тăсса пырать мăйне,
Путать суя мăнаçлăха.

Çуралнă хăшĕ харкашма,
Вăл такампа та тулашать.
Кашни çынра шырать тăшман,
Ун вăрçмасассăн - пуç кашлать.

Хăравçă çын вăл - хăравçах,
Хăй мĕлкинчен те хăй хăрать:
«Темскер сиксе ан тухтăр çак!..»
Çур чунĕ унăн тупăкра.

Элекçĕн ĕçĕ - çын çинчен
Сăмах-юмах çеç сарасси.
Тытса чараймăн чĕлхинчен,
Ăçта пăхатăн - ун сасси.

Çынна çăварĕнчен кĕрсе
Хыçран тухать хăшĕ-пĕри.
Йăпăлтатать питне пĕрсе,
Унра çук шанчăк - çил хӳри.

Юлашкинчен ак мĕн калам:
Кашни çын пурăнать хăйле,
Кашни хăй ĕçĕнче - талант,
Улăштараймăн нимĕнле.

## Çухатсассăн ху сăн-сăпатна...

Самана хальхи - тĕлĕнмелле,
Калăн, çаврăннă вăл тӳнтерле.
Тĕрĕслĕх, йĕркеллĕх çухалать,
Пит сайра хутра курăнкалать.

Халь çынпа пулсассăн чăн çынла,
Идиот пулатăн - кутăнла.
Тайăлнă ăсран тесе, часах
Пуç çинчен иртеççĕ таптаса.

Сĕмсĕр, намăссăр, чее пулсан,
Мăшкăл-хур тусан, улталасан,
Çынсемпе пулсан идиотла -
Эсĕ çын, хальхи герой çапла.

Сĕмсĕрлĕх, ултав - çак икĕ çул
Çитерет çынна телей патне?!
Чăн телейлĕ эсĕ пулас çук -
Çухатсассăн çын сăн-сăпатне.

## Йăнăшсем

Начар пулсан калав е сăвă
Сан май пур çĕнĕрен çырма.
Мĕнле аван - çапларах тăвăн,
Тыт черновик - лар куçарма.

Çапла ансатах мар çав пурнăç,
Çук йăнăша туртса хума.

Пĕлет - кам йăнăш туса курнă,
Пĕлменнине - ан сун тума.

Черновикех те пурнăç хирĕ...
Пĕр уйрăмлăх - йăнăшсене
Çума тивет куççульпе пирĕн.
Çук, тасатаймăн хăшсене...

## Бюрократ

Эрешмен картиллĕ тĕксĕм шăтăкра
Тĕлĕрет пĕрмай мимесĕр бюрократ.
Шăвăç куçлă пуçлăх нимĕн те курмасть,
Шартлатса çĕр чĕтресен те вăранмасть.

Виç кунхи виле сăн çапнă пит-куçне,
Мăк çӳç каркаланă пăтавкка пуçне.
Тытнă сĕтелтен ухват пек аллипе,
Сĕтĕрсе кăларасран хăранă пек.

Çук чĕри, хăлхасăр-суккăр - икĕ хут,
Кунсене ирттернĕ май çухатнă шут.
Çынлăх-чыслăха вăл сутнă, хăвăл чун,
Тинĕс тĕпĕнчи чи хытă, сивĕ чул.

Вăй çитсессĕн ку кăка, тункатана -
Пурпĕр вăл çын мар, мур, сăттана! -
Лăскăттăм, кăларăттăм тымарĕнчен,
Хурăттăм кĕвентепе шыçмакăн мăйĕнчен.

Тăранма пĕлменшĕн, непсĕ пулнăран,
Чĕрĕлле юн ĕçнĕшĕн ĕçчен çынран -
Ик алпа тытса ик хулăн пĕççине
Çапăттăм йăтса мăшкăл юпи çине!

## Маскарад

Ку халăх мĕн туса тăрать?
Ара, тапраннă маскарад.
Илемлĕ маскисем, ай-ай,
Артисчĕсем те пит нумай.

Пит илĕртӳллĕ сăнĕсем,
Хитре те савнăçлă вĕсем.

Калатăн: "Ырă-çке мĕнле!"
Пăхса тăрсан - тĕлĕнмелле.

Ăста вылять рольне кашни,
Сая каймасть-ха тăрăшни:
Çупаççĕ алă ырласа,
Тутисене саркаласа.

Йĕркесĕрлĕх хĕрсех пырать,
Кунта тем те тума юрать.
Тăр пуçхĕрлĕ - малтан питне
Манса ан кай илемлетме.

Кашни айккинелле тарать,
Чăн-чăн питне уçма хăрать.
Эп йăлăхрăм пачах, çитет,
Ку япала хăçан пĕтет?!

Курас килмест, çук, тупата,
Ултав, суя маскарада.
Пăхса тăрсан - йĕрĕнтерет.
Чун йышăнмасть, лĕклентерет.

Курасчĕ чăн сăнăрсене,
Çуса тасатăр сăрсене.
Хывса пăрахăр маскăра,
Хăçан пĕтет ку маскарад?!

Çĕр çăттăрах,
Мĕнпур тĕнче
Ултавлă маска
Айĕнче!

## Кашкăрсем

Сивĕ хĕл. Шур юр. Хура вăрман.
Кашкăр кĕтĕвĕ тăрать. Хашкать.
Çиччĕмĕш кун выçă, ним тытман.
Куçĕсем çунаççĕ çаврашка.

Хăтăлчĕ тарса ват хир сысни.
Çамрăк кашкăра асав шăлпа
Ывăтса хăварчĕ те хыçне,
Ыткăнчĕ шала тăвăр çулпа.

Кашкăр мăйĕнчен хĕп-хĕрлĕ юн
Сăрхăнать шур юр çине. Выртать.
Кунĕ пĕтрĕ ĕнтĕ халĕ ун -
Чĕлхине ак çавăрса çыртать.

Сыввисен вара çиес килет.
Тăлпама пусçлаççĕ вилене.
Хăй патне кашни туртса илет,
Пысăкрах çыртма ĕмĕтленет.

## Хăмпăсем

Путмаççĕ хăмпăсем шывра,
Сиксе тухаççĕ çиеле.
Эс ху та çăлăнăç шыра,
Путас пулсассăн - ишкеле.

Пуш хăмпă вăл санран кулать.
Тытма тăссассăн аллуна
Шап! çурăлать те - çук пулать.
Хăвна ху çăлайсан кăна...

## Чăнлăхпа

Чăнлăхпа пĕрле пулсассă н -
Пурăнма пит йывăр.
Суяпа тĕнче тулсассăн -
Чăнлăха çул тăвăр.

Чăнлăхпа пĕрле пулсассăн -
Пурăнма та çăмăл.
Нимĕнрен те хăрамастăн -
Ирĕкре чун-кăмăл!

## Çĕнĕ пушмак

Чĕмпĕр. Гончаров урамĕ.
Çу. Хĕртет. Вĕри асфальт.
Çĕн пушмак туяннăран-и -
Хулапа пырап шалт-шалт!

Çĕн пушмак ăнмарĕ темшĕн:
Кĕлене пĕрмай хырать.
"Хам хуйха кама калам-ши?"-
Эп шăла çыртса пырап.

Ак "Универмаг" кĕтесĕ...
Ик урасăр çын ларать.
Тумĕ те хура, çĕр тĕсĕ
Пичĕ çинче палăрать.

Ним ыратнине туймастăп...
Эх, çав! Чăтăмсăр та эп!
Унăн кĕлине хырмасть те -
Эп çапах УТСА çӳреп!

## ВИÇЕ

Тен, сăн-питрен илемлĕ эсĕ,
Тен, санăн ылтăну - чылай арча,
Платон е Аристотель ăсĕ -
Сана эп, çыннăм, палламап пачах.

Сăну, укçу, ăсу вăл - САНĂН!
Анчах мĕн турăн эсĕ ÇЫН ВАЛЛИ???
Çапла ача чухне ăс панă,
Ак ман ВИÇЕ çынна хакламалли!

## Хăратăп... хăравçăран

Мана ан шутлăр тимĕр çын тесе,
Хăратăп эпĕ пĕр япаларан:
Хура тăшманăм вăрттăн йĕрлесе
Яш! çĕçĕ лартасран пырса хыçран.

Çук хыçалта куç çыннăн. Çав начар.
Йăпшăннине сисеймĕн тăшмана.
Умран килсессĕн хăрамап пачах -
Парăнтараймĕ çăмăллăн мана.

Эп тухăттăм унпа кавир* çине -
Хăравçă çын вăл пăхаймасть куçран.
Вăр-хурахла тытать те çĕççине...
Çук, çук! Хăратăпах... хăравçăран!

---

* Кавир - (спортра) кĕрешмелли вырăн.

## Манра чăваш халăх пилĕ

Чăваш ятпа эп килнĕ -
Чăваш ятпах каяп.
Манра хам халăх пилĕ,
Ямап ăна сая.

Хам халăха юратăп
Мĕн сывлăш пĕтиччен.
Пуласлăха куратăп
Чăвашлăх тĕнчинче.

Анне мана çуратнă
Утма тата чăтма.
Хам хĕресе пăрахмăп,
Ӳркенмĕпех йăтма.

Аран йăсăрланмашкăн
Килмен ку тĕнчене.
"Вута кĕр ялкăшмашкăн",-
Чыс инçете чĕнет.

Чăваш чысне йăтмашкăн
Шеллемĕп пур вăя.
Килни ман пурăнмашкăн
Ан кайтăрччĕ сая.

## Ухмах ларсассăн пуçлăха

Ӳпкелешмеп. Чăтап
Темле терте, йывăрлăха.
Чăтма пултараймап -
Ухмах ларсассăн пуçлăха.
Вăрçмастăп эп ăна,
Вăрçап - ЛАРТАКАНА!

## Конвейер

Шалтăртатса конвейер шăвăнать.
Кичем.
Хура çĕлен пек курăнать.
Мĕскер тăваççĕ-ши кунта?
Сăнап...
Ай-уй, ай-ай!
Штамплаççĕ-çке чуна.

Мĕн япали ку?! Хыпкăчă мана
Тытса илсе пăрахрĕ кив стана.
Шăнăçаймарăм хĕсĕк шаблона,
Куратăп,
Каскăч
Пуç çине анать...

## Тӳнтерле

Пулсассăн эсĕ ĂСЛĂ -
Тăваççĕ-çке ухмах.
УХМАХ пулсан çеç çăмăл
Сана ăсла тухма.

## Курай́мăр чĕркуççи çинче

Курайăр эсир эпĕ кулнине,
Курайăр эсир эпĕ йĕнине,
Курайăр эсир эпĕ чупнине,
Курайăр эсир эпĕ ӳкнине,

Курайăр эсир эпĕ уррине,
Курайăр эсир эпĕ ӳсĕрне...
Нихçан курай́мăр чĕркуççи çине
Тăрса кама-тăр эп  пуççапнине.

## Тыткăнра

Ма пуçлăха вăрçса каятпăр-ха тăнран:
«Суять, вăрлать, ĕçет, кăнттам, ним те пĕлмест...»
Мĕн тутăр ĕнтĕ мĕскĕн. Вăл вĕт... тыткăнра.
Пулсассăн лайăхрах - кунта вăл ĕçлеймест.

## Мул çитмесессĕн - эсĕ чухăн

Сахал пулсан -
Çын чухăнне вăл пĕлтермест.
Чăн чухăн çав -
Кама нихçан та мул çитмест.

# Ачалăх ури йĕрĕ



# Çуралнă ялăм

Ешĕл йывăç айĕнче те айлăмра
Манăн тăван ялăм - Çĕн Йĕлмел ларать.
Иртнĕ ман ачалăх-яшлăх ку ялта,
Юлнă таврăнми çак тапхăр хыçалта.

Анкарти вĕçне утап - çырма хĕрне,
Вăл упрать ачалăхри ура йĕрне.
Тунсăх серепи карса илет ăша,
Эп путатăп лăпкăн тарăн шухăша...

Умăмра тăрать çырма-çатра, çаран,
Çакăнта чупса çӳренĕ-çке çарран.
Хăваланă пулă пылчăклă шывра,
Çумăр айĕнче шапарнă кăмпара.

Пĕчĕкçĕ чухнех саваттăм хурăна,
Халĕ вăл пушшех илемлĕн курăнать.
Лăпкă çил çинче кăчкисене силлет,
Палласа, мана саламласа илет.

Тулнă çеремре ача-пăча лăках...
Тунсăхпа аса илеп ачалăха.
Çуйхашса чупса выляççĕ лапталла.
Майĕпен анатăп вашмăк лапалла.

Малалла утатăп таврана пăхса,
Ман ума тухать пĕр пысăк мар хысак.
Чăнлă шывĕпе тӳр Хурăн вар çырми
Çакăнта тăванлашаççĕ уйрăлми.

Шалалла утса кĕреп хурăнлăха,
Чарăнса тăратăп пĕр самантлăха.
Кайăксен илемлĕрех кунта юрри,
Танлашма пултараймасть таçти, ютри.

Таврара ав илĕртӳллĕ пыл шăрши,
Çакă ырлăха туйман çын та пур-ши?!
Ял çине вăл техĕмне вĕçсе сарать,
Симлĕ тутипе чуна савăнтарать.

Эп кĕреп Малтикасса хуллен утса,
Тирек-йăмра ăшĕнче ларать путса.
Туйăнаççĕ йывăçсем пуç тайнă пек
Пынă чух иртсе эп хамăр енĕпе.

Тӳремре чиркӳ мӑнаҫлӑн курӑнать,
Ентешсем ҫӗкленӗ тепӗр хут ӑна.
Икӗ купол кармашать ун тӑрринче,
Йӑлкӑшса ҫунаҫҫӗ сар хӗвел ҫинче.

Хам ялта кашни кӗтес ҫывӑх мана,
Чӗрепе-чунпа туйса тӑрап ӑна.
Инҫете кайсассӑн та - пин ҫухрӑмра -
Ялӑн евӗклӗ йыхравӗ ман ҫумра.

Мӗнлерех, ай, ҫывӑх ялӑн ҫыннисем,
Ачаран паллану чӗрери сӑнсем.
Кашнинче куратӑп хамӑн тӑвана,
Эпӗ ҫакӑнта - ялан кӗтен хӑна.

Кирлӗ мар Париж, Венеци, Берн, Дамаск, -
Ҫӗн Йӗлмелӗм тыткӑнран чуна ямасть.
Маншӑн хамӑр ял - сӑпка, типми ҫӑл куҫ,
Ҫакӑнта ҫеҫ телейпе ҫунать ман куҫ.

Ку ялта пур эп ҫуралнӑ ҫурт, анне,
Чун туртать ӑҫта пулсан та ку енне.
Ҫавӑнпа килетӗп хаваспа киле,
Хам савса ҫуралнӑ Ҫӗнӗ Йӗлмеле.

## Чӑваш хӗрарӑмне

**Аннене халалласа...**

Чӑваш хӗрарӑмӗ, кун-ҫулу санӑн
Иртет пӗр сисӗнмесӗрех ялта.
Татти-сыпписӗр ӗмӗрне васканӑ,
Ҫулсем нумайӑшӗ халь хыҫалта.

Тул ҫутӑлмасӑрах ӗне сӑватӑн,
Ӑна кӗтӳ кайма ӗлкӗртмелле.
Чупса ҫул майӑн вунӑ ӗҫ тӑватӑн,
Кил-ҫурт ӑшне тирпейлӗх кӗртмелле.

Ҫемье шӑп ҫывӑрнӑ чух пӗҫеретӗн,
Апат ҫимесӗрех юлан пуль ху.
Ӑҫтан-ха мӗнпурне эс ӗлкӗретӗн?
Хӑш вӑхӑтра канатӑн? Ҫук ыйху.

Килти ĕçÿсене никам хаклаймĕ,
Кунран-кун çук вĕсен вĕçĕ-хĕрри.
Нимле пуян та тÿлесе татаймĕ,
Пĕри пĕтмен - кĕтсе тăрать тепри.

Килте пĕр çаврăнăш тапăртатсассăн,
Ĕçе васкан. Чăваш кĕпи арки
Ваштăртатать çил майăн кассăн-кассăн,
Питре - ирхи хĕвелĕн пайăрки.

Ĕçре те арçынпа пĕр тан ĕçлетĕн.
Пĕр тан кăна-и? Чĕкĕнтĕр хирне
Чĕркуçленсе тухатăн, тирпейлетĕн.
Çемйÿшĕнех хавшатнă чĕрÿне.

Ялта сан ĕçлемен ĕçÿ юлман-тăр,
Чăваш хĕрарăмĕ вăл ÿркенмест.
Лаша та кÿлнĕ, çапнă кантăр,
Сан тарăсăр тыр-пулли те ÿсмест.

Ачу-пăчу инкек курсан - сиресшĕн -
Ху витĕр кăларан ун хуйхине.
Пурнатăн çакă тĕнчере вĕсемшĕн,
Анне пулсассăн - лайăх ачине.

Мĕн ĕмĕрех ĕçленĕшĕн канмасăр
Пуçа çĕре перĕнтеретĕп. Тав!
Чунне веç панăшăн - ним хăвармасăр -
Чăваш хĕрарăмне пин хут мухтав!

## Кукаçи

**Кукаçие - Симулин Василий Васильевича асăнса.**

Эп пулнă пиллĕкре, кăшт астăватăп,
Ман кукаçи выртатчĕ вырăнпа.
Вăл çитмĕлтеччĕ - ку ачашăн ватă,
Пĕрмай асапланатчĕ суранпа.

Тăрса ларса вăраххăн ÿсĕретчĕ,
Хаш-хаш сывлатчĕ пĕтĕм кăкăрпа.
Хулпуççине кăлт-кăлт вăл сиктеретчĕ
Хайне пит сывламашкăн йывăрпа.

«Хăшсен ав нуши пĕтнĕ, вилсе юлнă,
Шел пулнă-ши-ха маншăн пĕр пульли?
Пĕри çеç ăнсăртран лекмелле пулнă -
Пулмастчĕ халĕ асапланмалли».

Çакна вăл çăмăлтан пуль каламастчĕ,
Юхатчĕ пĕр ури ун пӳрленсе.
Суран çинче ялан сип-симĕс маçчĕ,
Анчах нихçан çитместчĕ тӳрленсе.

Вăл тухнă виçĕ вăрçă вучĕ урлă,
Мĕн чул выртман пуль сивĕ юр çинче.
Сахал каçман-и юхан шыв та шурлăх,
Миçе пăхман пуль вилĕм куçĕнчен.

Вăл тăхăр çул хывман хыт кирзă атă,
Канса, тăраниччен пуль çиеймен.
Нихçан манаймăн: Ленинград... Блокада...
Аманнă, Берлина кăшт çитеймен.

Тăшман «парни» кукаçие те лекнĕ,
Анчах сывах вăл кайнă-ха тăрса.
Тăхлан татки пĕр урине çеç тĕкнĕ,
Шала кĕрсе вырнаçнă шăтарса.

Суранĕ пек чĕри суратчĕ пулĕ,
Аса илсен çапăçусем çинчен.
Хăйне ӳкереймен пулсассăн пуля -
Ӳкмен-и тусĕсем куç умĕнче?..

Кукаçипе эп çумлăнах выртаттăм -
Ват салтакпа - хĕрӳллĕн ăшăнса.
Ун урлă вăшт! каçаттăм та чупаттăм,
Пăхса юлатчĕ пулĕ ăмсанса...

## Хĕллехи вăрманта

Хĕл пĕркенчĕкне йалт витĕннĕ вăрман,
Пуç çинчен хупланнă шурă чатрĕпе.
Кăпăш юрĕ ларнă чĕркуççи таран,
Майĕпен шуса пыратăп йĕлтĕрпе.

Тарăн ыйха путнă хĕллехи вăрман,
Юмахри пек шăп лараççĕ йывăççем.

Çакăн пек илемлĕхе нихçан курман,
Мерченсем тăкаççĕ тумĕсем çиçсе.

Тĕлĕрет лăс чăрăш симĕс тумтирпех,
Ачашлать шур хурăна пуçне тайса.
Раштаври хĕвел шевли çинче ирех
Хурăн вуллисем силленчĕç çуталса.

Ялкăшаççĕ шевлесем, пин лĕпĕш пек,
Туратсем çинче выляççĕ вăййине.
Çакăнса тăрать пилеш çупкăмĕпех,
Таврана сапать вăл хĕрлĕ хĕлхемне.

Хĕл Мучи пытаннă йывăç хыçĕнче,
Чĕпĕтсе питрен хĕретрĕ ман сăна.
Халĕ вăрманта - раштав сиввисенче -
Вăл пĕччен хуçаланать, вуçех сăнать.

Уçă сывлăш тулчĕ ман кăкăрăма,
Эп туятăп лекнĕн шурă çăтмаха.
Еплерех асамлă хĕллехи вăрман!
Ас илтерчĕ вăл ытарлă юмаха.

## Пушă çурт

Ял хĕрринче кичеммĕн
Ларать пĕр пушă çурт.
Мĕн шухăшлать-ши? Темĕн.
Хуçи ун халĕ çук.

Кăшт тайăлнă. Хуратнă
Юр-çумăр сăн-питне.
Чӳречине те ватнă,
Шалт хупнă хуппине.

Йĕри-тавра çум курăк,
Мăян - пуç таранах.
Хапхи те тайлăк, çурăк,
Салхуллăн курăнать.

Çурт кăвапи-тымарĕ
Йăлт татăлнă тĕпрен.
Пушаннă унăн варĕ
Вучахĕ сӳннĕрен.

Шавланӑ та кӗрленӗ
Ку ҫуртӑн ӑшӗнче,
Ача-пӑча сӗрленӗ...
Халь акӑ - пӗр пӗччен.

Инҫех вӗҫсе-ҫке кайнӑ,
Ҫунат сарса, чӗпсем.
Ҫара йӑви пуҫ тайнӑн
Ларать халь те кӗтсе.

## Пӗччен хурӑн

Хир варринче ларать пӗр хурӑн,
Кӑтрисене саркаласа, ухса.
Пурнӑҫӗнче курман ним ырӑ,
Пӗччен кӑна сыхлать вӑл ку пусса.

Кунта мӗнле ҫитсе вӑл лекнӗ,
Тен, пулнӑ ун юлташӗсем ҫумра?
Вӗсем мӗне пула-тӑр пӗтнӗ,
Ку хурӑнра вӑй пулнӑ нумайрах?

Е вӑррине инҫе вӗҫтернӗ,
Килсе пӑрахнӑ ҫакӑ вырӑна?
Ҫил ачисем кунтах ҫитернӗ
Пӗччен шӑпа пилленӗ хурӑна?

Халь урнӑ ҫил пырса силлет-и,
Ун пытанмашкӑн ҫук никам хыҫне.
Е ҫавраҫил ҫитсе килет-и,
Ярса илсе лӑскать ҫемҫе ҫӳҫне.

Е капланать хура сӗм пӗлӗт,
Чӳхет сив ҫумӑрпа енчен-енчен.
Ун хӳтлӗх ҫук - малтанах пӗлӗ, -
Чӑтас пулать асапсене пӗччен.

Килсессӗн те эсрел ҫанталӑк,
Ларать шур хурӑн хӑй вырӑнӗнче.
Пуҫне усни кӑна кӑшт паллӑ,
Юлташӗсемсӗр-ҫке ӑна кичем.

Хир варринче ларать шур хурӑн,
Сулкаланса, тӑкса шерепине.
Чӑтма ҫук чух та танлӑ курӑн -
Ҫуралнӑ пурӑнма эс Ҫӗр ҫине.

## Кивĕ сукмак

Ачалăха аса илсе
Çӳрекелетĕп çырмана.
Паян ирпе кунта килсен -
Курап палланă çырана.

Пăхатăп та - халь хăй пек мар,
Татах та ишĕлнĕ çыран.
Сăнне çухатнă Хурăн вар
Хысакĕ лаш! катăлнăран.

Йăлт ишнĕ вăхăт сукмака,
Çавăрăнса çул тумалла.
Эп калайманччĕ сăмаха,
Кама халь айăпламалла?

Çыран хĕрри халь çырмара,
Сукмак та аннă ишĕлсе.
Çапла сикеççĕ авăра,
Иртеççĕ çыннăн çулĕсем.

Утса çӳреп хысак çинче,
Кив сукмака пустуй шырап.
Пĕлеп, çырман чи тĕпĕнче -
Нихçан тухаймĕ вăл шывран.

## Тăван шкулти тĕлпулу

Пĕрле вĕреннĕ тантăш-тус,
Мĕнле, ай, хăвăрт вăхăчĕ шăвать.
Нумай пулать-и-ха — ас ту
Кулса, чупса çĕкленĕ шăв-шава...

Çу уйăхĕ çитсен, пĕр ăшă кун,
Класран тăрса тухса шкул картишне
Каларăмăр щкула: «Сыв пул!..»
Ачалăх юлчĕ сĕм тĕтре ăшне.

Шкула чупса куллен ирех
Ачалăх-яшлăх вăхăчĕ иртет.
Ялан курас килет сире,
Тахçан пĕрре курсан чун хĕпĕртет.

Халь таварăймăн çулсене,
Килеймĕç шухăшсăр, хавас кунсем.

Шкулта хăварнă вĕсене,
Анчах çавах пит çамрăк-ха чунсем.

Аса илеп сире часах,
Сăнарсене тытап куç умĕнче.
Эп килтĕм йăлт тунсăхласа,
Ларатăп халь туссен ытамĕнче.

Пăхса тăранаймап сире:
Хитре те çывăх сăнăрсем епле!
Сиксе тапать паян чĕре,
Пĕр чарăнмасăр сирĕнпе пуплеп.

Шăпа вăл тĕрлĕрен тухать,
Кашнин пулать-çке хăйĕн ăраскал.
Тус, шанчăкна эс ан çухат -
Шкулта пире вĕрентнĕ çавнашкал.

Пĕрле вĕреннĕ тантăш-тус,
Ларса аса илер-ха яшлăха.
Паян уяв - пуçна ан ус,
Шанса эс тăр аван малашлăха.

## Пăрçара

Иртсессĕн утă уйăхĕн çурри
(Мĕн авалтан кăларнă йăлапа)
Ял халăхĕ - вăй-хал пурри -
Пăрçа ани çине тухатчĕ çавапа.

Эп астăватăп: аттепе анне
Мана илсе каятчĕç хирелле.
Килте юлма пулман-çке асанне, -
Кун иртттереттĕм вĕсемпе пĕрле.

Чăваш хире çитсен, пайне курсан,
Çамки çине алне хурса пăхать.
Хĕвелтухăçалла хирĕç тăрса,
Пуçне таять, виç хутчен сăхсăхать...

Хĕвел çӳл тӳпере. Çан-çурăма
Хĕртет, лапка çинчи пек, пĕçерет.
Чăх çăмарти пиçет ним мар
Чавса хурсан тăпра ăшне, çĕре.

Çава сасси инçе каять: чаш-чаш!
Паккусĕ тăсăлса юлать хыçа.
Çĕр çумĕнченех илтерет чăваш,
Каçалăк тăрăх майĕпен шăвать.

Çĕр çумĕнче йăсăрланать ăрша
Йăтасшăн, калăн, вĕри хумĕпе.
Мĕскер-ши ку? Пĕлесшĕн тăрăшап.
Чупатăп таврара эп кунĕпе.

Тар сирпĕнет, чĕлхе-çăвар типет.
Мĕн чухлĕ шыв ĕçет çын кун-каçа?
Шывне лартса хăварнă пичкепех,
Ăна шел мар. Ăçта вăл вырнаçать?

Çулсан-çулсан ак ывăннă хресчен
Тытса пăхать мăкалнă çавине:
"Çава туптаканни килет-ши? Тен,
Çăмăлтарах хуть пулĕ хулсене".

Мăлатукне тытса, сунтал йăтса
Тăсмак арçын ума çитсе тăрать.
Урисене хуллен вăл хуçлатса,
Майлашăнса, чĕркуçленсе ларать.

Чанклатнă сасă ян каять инçе.
Ун хыççăн турткалать те хăйрипе -
Çил ачисем çава сăмси çинче
Кĕçенкелеççĕ çамрăк ăйăр пек.

Паккуссене урлă-урлă каçса
Тарланă бригадир çитсе килет.
«Мĕнле халсем-ха»? - калаçса,
Тарне карттусĕпе шăлса илет.

"Хал аванах, вăй çеç сахалланать, -
Шӳтлет чăваш. - Е хурçă трактора
Кӳлме пулмасть çулма çак анана?
Кур-ха, хресчен мĕн чул тар юхтарать".

Леш айăплă саспа: «Пулмасть. Ăçта!
Çук, трактор çулаймасть ку анана.
Аппаланса та пăхрăмăр кăштах...
Çĕççи çумне пралук пек чăлханать».

Пуçне силлет те, тĕлĕннĕн туса,
Хресчен каллех çава сулать: чаш-чаш!..
Хураймасассăн трактор паккуса -
Вăй çитерет çулса тухма чăваш.

## Кĕрхи элеги

Кунсем кĕскелчĕç. Сывлăш янкăр уçă.
Хирти ыраш улăмури яла
Çывхарчĕ, шăтса тухрĕ ешĕл уçăм.
Мулкач ун çийĕн вăрттăн чупкалать

Тӳпе уяр. Шыв кӳлĕре тасалнă,
Тăп-тăрă, вĕтĕ хумсемпе чĕтрет.
Ял çийĕн сасă илтĕнет асамлăн,
Ир еннелле карса илет тĕтре.

Канать уй. Кăкăрĕ пушаннă унăн,
Шур çăкăр шăрши юлнă ун çине.
Ват хурăнлăх хура çĕре тав тунă,
Хир тăрăх сапнă ылтăн укçине.

Тăрна карти çап-çутă кӳлĕ урлă
Хуллен вĕçсе иртет кикаклатса.
Çунат çинчен ӳксе юлчĕ салхулăх,
Хĕстерчĕ чĕрене ярса тытса.

Çӳлте мăнаçлă çунатсен оркестрĕ
Кĕрхи хурланчăк кĕввине калать:
"Паян уйрăлмалли самант ак çитрĕ,
Тăван çĕршывăмăр пит шел юлать.

Малта пире мĕскер кĕтет - пĕлместпĕр,
Пурте таврăнăпăр-ши каялла?
Шăпа мĕнле пулсан та - иртейместпĕр.
Ки-как!.."
Эп султăм нумайччен алла...

## Хӗл увертюри

Ӗнер кӑна ҫырма шавлатчӗ,
Шыв чӗлхине авкаласа пырса.
Паян хрусталь шӑлне вӑл тачӑ
Вӑйпа ҫыртса тӑрать янраттарса.

Ҫуран тӑман - шур анаконда -
Шуса пырать хир тӑрӑх майӗпен.
Ҫӑтать веҫех - апачӗ янтӑ,-
Ҫавӑркалать лӳперрӗн майӗпе.

Ҫул урлӑ чашкӑрса каҫсассӑн
Хура тӗм хыҫӗнче тӳлек тупать.
Яш туртӑнса сывланӑ хыҫҫӑн ассӑн
Лӑп кӳпӗнет те - чунӗ ун тухать.

Кӗрхи сив ҫил, ӳнерҫӗ-график,
Кашни ҫулҫа тытса тата-тата,
Вӑрман тумне хывса пӑрахнӑ.
Ҫара хӑварнӑ йывӑҫ-турата.

Пӗрремӗш юр ҫинче салхуллӑн
Ҫинҫе хулла кӑшлать мӑкла пӑши.
Юман ҫинче ҫеҫ ҫулҫӑ юлнӑ,
Миҫе кун вӗлкӗшсе вӑл ларӗ-ши?

Сип-симӗс кӑпӑк - хыр вӑрманӗ -
Тытасшӑн сӗм, аял пӗлӗтсенчен.
Чӳк уйӑхӗ - раштав тӑванӗ,
Сив хӗл те алӑк урати ҫинче.

# Икĕ юрă



# Ҫӗнйӗлмелсен юрри

Сӑвви Николай ЛАРИОНОВӐН
Кӗвви Геннадий КОЛЬЦОВӐН



Шурăмпуç ÿксен Хăла тÿпе çине,
Çĕн Йĕлмел ĕçченĕ харăс вăранать.
Савăк кăмăлпа тухать тыр пуссине,
Чăнлă тăрăх çепĕç юрă шăранать.

**Хушса юрламалли:**
**Çуралнă ял - Çĕнĕ Йĕлмел,**
**Эс чĕрере, тăван кĕтес.**
**Сÿнми çăл куç, ман тăван ен,**
**Хавал парса тăратăн эс.**

Пучахсем парка ÿсеççĕ пуç тайса,
Тырă тинĕсне пăхсан - чун савăнать.
Тÿпере тăри юрлать каçса кайса,
Ылтăн алăллă ял-йышăн ĕç ăнать.

**Хушса юрламалли.**
Илемли çук хамăрăн тăван ялтан,
Кунсерен ун сăн-сăпачĕ çĕнелет.
Вырмара та вăйăра - эпир малта,
Несĕлсен чысне çĕклетпĕр çÿлелле.

**Хушса юрламалли:**
**Çуралнă ял - Çĕнĕ Йĕлмел,**
**Эс чĕрере, тăван кĕтес.**
**Сÿнми çăл куç, ман тăван ен,**
**Хавал парса тăратăн эс.**

# Эсĕ килместĕн

Сăвви Николай ЛАРИОНОВĂН
Кĕвви Марина ШУРАКĂШĂН




Чечексем татса ҫӳрерĕм
Анлă, ешĕл улăхра.
Эсĕ ман пата килмерĕн,
Вăхăт иртрĕ пит вăрах.

Пĕр сана кĕтсе ҫеҫ татрăм
Тĕрлĕ  тĕслĕ чечексем.
Тăлăх чунăма йăпатрăм
Сана парнелĕп тесе.

Шанчăкпа утса çӳрерĕм,
Урлă тухрăм уй-хире.
Улăхра халь юлчĕ эрĕм,
Пушă вырăн - чĕрере.

Эс килместĕн - эп кĕтетĕп,
Чун сисет, тĕл пулас çук.
Чечексене парнелеймĕп,
Иртсе кайĕ юрату.

# Ку пурнăçра ху ăсупа пурăнмалла



# Ертӳçĕ Кăвакал

Кăвакал аçи тĕме çине тăрса,
Хулăн сассипе калать нартлаттарса:
«Юлташсем, ак çĕн хыпар мĕнле,
Ялăн варринчи çутă кӳлле
Малашне тек юрамасть кайса чăмма,
Урăх вырăн тупăпăр кĕç çăвăнма.
Вăхăт халь ăна татса яма,
Усă вăл памасть вĕт никама...»
Шавлăн çĕмĕрсе яраççĕ пĕвене,
Кăвакал аçи тăсать мăнаç пĕсехене:
«Паянтан каятпăр ак ансат лупашкана
(Шухăшне, паллах, «çӳлтен» хушнă ăна),
Пăхăр-ха, епле ун сийĕ сарăлать,
Çакăнтан ишсе тухма пулать, тет, Атăла».
Хăй йышне ертсе вăл кайрĕ лупашка енне,
Таврана пăхать ун-кун, пăра-пăра майне.
Халь пăтранчăк та хура шывра чаваланать ку йыш,
Ку ертӳçĕ хăй кăна тăхтарĕ кăшт.
Вăл часах, çӳллĕ хӳме айне чăмса,
Сарă тулă кĕлетне кĕрсе каять, лаптăк сăмса.
Самаях тăрсан, пăрса тухать пĕсехине:
«Халĕ ĕнтĕ кайăпăр, - тет вăл, - кил енне».
Анчах кăлăхах тăрать майне тăсса,
хăйне хака хурса,
Тин ăнланчĕ ертӳçе ку йыш,
вăл мĕнлине курса:
Ырă ят илтсе тăрса тултарнă май пĕсехине,
Вăл ертсе каймашкăн хатĕр тамăка та вĕсене.

# Куракпа Кушак

Çитсессĕн çуркунне вĕçсе килчĕ Курак.
Шырать йăва валли пĕр çирĕпрех турат.
Вăл пăхкалать тавраналла енне-енне,

Ним тупаймасть каймалли кăмăлне.
Вăл ахалех тертленнине курсан Кушак,
Хуллен çеç çывхарса, лăпкăн сăмах хушать:
«Тус, кирлĕ мар пит хытă аптрама,
Çак йывăç тăрринче пит меллĕ чĕпĕ кăларма».
Сулать тайлăк хăва енне пуçне,
Чеен кăна хĕссе илет симĕс куçне.
Кушак кăтартрĕ хăрăк турата:
«Сана эп ыр тăвасшăн тупата».
Хайхи Курак итлерĕ Кушака,
Вăл ăсталарĕ йăвана çап-çавракă.
Пĕр тапхăр ларнă хыççăн çӳллĕ йăвара,
Куракăн тухрĕç чĕпписем ак - çап-çара!
Анчах вăл чĕпсене çеç ĕлкĕрчĕ пăхса,
Хаяр çил-тăвăл кайрĕ тулхăрса-тухса.
Айван Курак телейĕ пулчĕ пит кĕске:
Унччен хуралнă, типнĕскер,
Шарт! турĕ йăвана тытса ларан турат.
Чее Кушак çакна кăна кĕтсе тăрать.
Часах вăл чĕпсене кăп-кап! ярса илсе,
Çухалчĕ хыт пиçен хушшинелле кĕрсе.

* * *

Кунта ак мĕн палăртмалла:
Ку пурнăçра ху ăсупа пурăнмалла.
Канаш парать пулсан чее Кушак -
Чăтас пулать сан малашне нумай нуша.

# Кӳлĕ хĕрринче

Çулла. Хĕвеллĕ ăшă кун пĕрре
Виç йытă тухрĕç тарăн кӳл хĕрне.
«Атьăр, хамăр кăна пĕрле пурнар», -
Калаçрĕç кĕç бульдог, овчарка, сенбернар.
"Ăратлă-çке юнпа эпир пурте,
Экстерьерпа та пире кам иртет?
Çук, пирĕншĕн ыттисем ним те мар,

Туссем, выляр, кулар, чупар".
Кусем хёрсе вылянă вăхăтра
Вĕсем патне Шарик çитсе тăрать:
«Мана та илĕр-ха чупма пĕрле,
Эп йăрă вăйăра, эп кил те хураллатăп сĕм çĕрле».
"Мĕн?! Пирĕнпе?! Эс кам?! Мĕскер тата?!
Е пирĕнне ярасшăн-и ята?
Ула-хăла, çăму кĕске,
Эс пĕвĕпе те - пўрнеске.
Сассу çинçе. Эс пирĕншĕн - никам, -
Харлатрĕç йытăсем кăнттаммăн.- Хам-хам-хам!..
Эс тивĕç вăтанса тăма,
Каккуй хушма пире сăмах.
Вылясшăн-и кунта эс пирĕнпе?
Уттар халех килне çак çеремпе!"
Хурланчĕ Шарик, усрĕ вăл пуçне, хуллен,
Вĕрмесĕр утрĕ килĕ еннелле.
Ăратлă йытăсем - суя туссем вара
Çаплах сиксе çўрерĕç таврара.
Нумай иртмерĕ вăхăт, тепĕр самантран
Хăрушă сас илтĕнчĕ çырмаран.
Кăлăк чăххи çĕклерĕ шăв-шава:
«Çăлсамăр! Чĕппĕм сикрĕ ман шыва!»
Тăп! чарăнчĕç чупма «ăратлисем»,
Пăхаççĕ пĕр-пĕрне куçран вĕсем:
"Мана-и кирлĕ? Сик шыва тата!..
Ман каймалла киле халь апата".
«Çăма манне çăваççĕ супăньпе.
Çук, вараламастăп эп ўте шыв пыйтипе».
«Ман каймалла выставкăна кĕçех,
Начарланатăп сив шывра вуçех...»
Пĕтерейменĕç çак калаçăва -
Тем шăмпăрт! турĕ тарăн, сив шыва.
Пăхаççĕ те, ку - Шарик... Чăхă чĕппине
Йăтса тухать вăл кĕç çыран патне.
Хăй ывăнна, аран сывлать,
Ачашшăн сар чĕппе пуçран шăлать.
Ăна парать кĕç чăхă аллине -
Тин уттарать килне.

* * *

Калас сăмахăм вăрăм мар:
Çынна ăсне-ĕçне кура хаклар.

# Чĕрĕппе Йĕкехӳре

Ват Кашкăр-Кашаман патне пĕрре
Ĕçе кĕмешкĕн пынă Чĕрĕппе Йĕкехӳре.
Ун-кун пăхкаласа илсен çиллес
Хуçа çырать приказ:
«Илес!»
Пикенчĕç тăрăшса туссем ĕçе -
Хыçран çăра тусан кăна вĕçет.
Пĕрех вĕчĕленет усал Хуçа:
«Кам тирпейлет-ши манăн çи-пуçа?»
Кӳрши вăйпа ĕçленине курсан,
Йĕкехӳре каять кĕç тарăхса:
«Патваррăн ĕçлекен Чĕрĕп туса
Нихçан çитеймĕп ку ĕçре хăвса».
Унтан, ват Кашкăр шухăшне сиссе,
Вăл йăскăннăн куçне илет хĕссе.
Юлташĕ тар кăларнă вăхăтра
Хуллен Хуçа патне шуса пырать.
Кĕрсе каять вăл Кашаман йăви ăшне,
Йăта-йăта тухать ун каяшне.
Тĕршĕнерех ларать Хуçа çумне,
Çула-çула кĕç якатать ун хыт çăмне.
Пĕр айăпсăр Чĕрĕп çинчен вара
Суя сăмах сарать йĕри-тавра...
Пурте куратăр, мĕн каламалли:
Йĕкехӳре халь... Кашкăрăн сылтăм алли.
Ун пур веçех хăйне мĕскер кирли...
Çапла, ку пурнăçра пулать тĕрли.
Ĕçчен Чĕрĕп вара паян кунччен
Çĕрте чакаланать, пурнать тĕм айĕнче.

* * *

Сыхланăр, йăпăлтишĕн чыслăх çук.
Вăл хăйшĕн çеç ăвăннă чух
Такам чунне кĕрет авкаланса-шуса,
Чи çывăх юлташне сутать виçĕ пуса.

# Чăрсăр Автан

Пурăннă пĕр кайăк-кĕшĕк картинче хура Автан.
Пулнă вăл айван, пулайман ыттисемпе пĕр тан.
Хăй хура пулнишĕн кĕвĕçсе ăмсаннă сар автансене,
Курайман чунтан вăл вĕсене.
Çавăнпа ăна никам та юратман,
Çывăха хăйсем патне яман.
Çакăншăн çилленнĕ те пурин çине,
Шухăшланă пушатмашкăн çиллине.
Картари ним айăпсăр мĕнпур чĕппе
Ку Автан чăрсăрланса тăрăнтарать çапкăч-хĕçпе.
Шеллемесĕр çивĕч сăмсипе те "хăналать",
Чунĕ каниччен хăвалать:
«Шăл витмест пулсан ыттисене,
Эп «ăса кĕртетĕп» чĕпсене».
Çамрăк чĕпсене кӳрентерсе, вăл картара
Çăмăлах тухасшăн паттăра.
Пытанаççĕ хушăк-хашăка лешсем, пусма айне.
Вĕçрĕ мамăк-тĕк,
мăнкăмăллăн Автан тăсать мăйне,
Кăмăлне тултарчĕ-тĕр çаксем:
«Кам манпа? Пĕлесчĕ эп камне...
Мĕскер?!»
Шурĕ çу куллен. Ак çитрĕ кĕркунне.
Тухрĕç, çитĕнсе çитсе, чĕпсем хура Автан умне.
Çӳллĕ, сарлака пурте кӳлепипе, патвар,
Çавăрса илейрĕç Автана йĕри-тавра вăр-вар.
Ах! Мĕскер-тĕр пулчĕ чăрсăр Автана,
Чĕтрекен ури ăна тытмасть, лаш авăнать.
Çунатне те, хӳрине те усрĕ çĕр таран,
Хушаймасть сăмах, ура çинче тăрать аран.
Ӳкрĕç куçĕсем тухса хăранипе черкке пекех:
«Акă çитрĕ пулĕ вăхăт, халь лăскаççĕ
пурте ман тĕке».
Тепĕр самантран хура Автан пуçтарчĕ юлашки вăйне
...Силленсе чупса кайса пытанчĕ
леш пусма айне.
Çавăнта кунне-çĕрне вăл халĕ ирттерет,
Валашка патне çиме кăна хăра-хăра
тухса кĕрет.

# Темиçе йĕркен

Ăмсанать сар Чăхă Кăйкăра тӳпенелле пăхса:
«Ах, мĕнле вăл çитнĕ çӳллĕ пĕлĕте?»
Хăй вара пĕр чарăнмасăр, антăхса,
Навуса пĕр май тăрмаласа вĕтет.

* * *

«Мĕн кĕтмелли пур ман ку пурнăçран, -
Сывларĕ хаш! Пăта. - Шăпам пулмарĕ-çке ăнса.
Тĕреклĕ чух çапаççĕ сулăнса пуçран,
Вăраççĕ çӳп-çапа эп авăнсан».

* * *

Кушак шăши тытма вĕрентрĕ пысăк çурине.
Тăнларĕ лешĕ тинкерсе... Анчах ывăнтарасшăн мар
çура хăй урине.
Меслет вăл тупрĕ пурпĕрех: ват амăшĕ
шăши тытса кĕрсессĕн аслăк айĕнчен
... Чупса пырса туртса илет çăварĕнчен.

* * *

Ват Сысна каларĕ: «Мĕншĕн-ши мана
хисеплемеççĕ таврара?» -
Сулахай енне çаврăнса выртнă май лачакара.

* * *

Авăнчăк Пăта кĕрсе каять урапана:
«Çавă кирлĕ, ан пăрахăр çул çине мана».

* * *

"Ма мухтаççĕ пĕчĕк Шăпчăка?
Чакăлтатма пĕлмест вăл", - тет Чакак.

* * *

Икĕ йытă туслăн утрĕç юнашар,
Шăмă тупрĕç - кайрĕç çапăçса хăр-хар!

* * *

«Манпа пĕр шухăшлă эс пулмасан, -

тет пуçлăх, ват Ашак,

Ĕçе илсессĕн Чĕрĕпе... - Санпа сывпуллашап».

* * *

«Лаша вăл манăн - çывăх тус-тăван», -
Тет хырăмĕ айне вĕçсе кĕрсен Пăван.

* * *

«Вĕлле хурчĕпеле эпир пĕр ĕç тăватпăр, -

тет Шăна.-

Манран вăл тушкипе кăшт пысăкрах кăна».

## Савăнăç

"Мĕн савăнатăн? Мĕн шăлна йĕретĕн?
Ĕнер сан çунса кайрĕ-çке мунчу.
Ăçта-ха малашне мунча кĕретĕн,
Ăçта-ха çăвăнĕ ачу-пăчу?"
"Паллах, ман пысăк хуйхă пулчĕ...
Анчах пытараймастăп савнăçа текех.
Мунчам кĕлленчĕ те, хуть çуртăм юлчĕ.
Ав кӳршĕн çурчĕ çунса кайрĕ тĕпĕпех!..
Эх-эх!.."

# Вырăсларан куçарнисем

**Сергей МИХАЛКОВ**

# Ăсчах Кушак аçи

Сехерленет, тарать Шăши çури - Кушак аçи хыçра.
Тата кăшт çеç - вăл уйрăлатчĕ пурнăçран!
Анчах пĕр шăтăк лекрĕ куç умне -
Кун пек час-час ăнмасть! - çав çеç хăтарчĕ
пурнăçне унне.
Кушак аçи шăпланчĕ те, пăхса шăтăкалла,
"Хам-хам!" - хамлатрĕ йытăлла.
Шăши ăрачĕ анчăкран пит хăрамасть паллах!
Шăши чĕппи те тухрĕ... Пĕтрĕ, кĕреймерĕ каялла!
"Пĕр ют чĕлхе пĕлни пит усăллă иккен!" -
Хăй ăшĕнче шутлать Кушак аçи чеен.

# Чапшăн çунни

"Юлташăм, сывă-и?!" - "Ах, эсĕ-и? Салам!"
"Ăçтаваскатăн?" - "Акă мĕн калам:
Эп пичетлентĕм! Ак хаçачĕсем! Пăхсам!"
"Эс пичетлентĕн-и? Кала-ха, ан тăссам!
Ăçта чупан?" - "Савăнтармашкăн çемьене!"
"Хайларăн мĕн? Статья? Калав е сăвă тен?
Эс лайăх çырнине хальччен пĕлмен".
"Çук, çук. Ыттисемпе пĕрле хушамата
Эп çырса хутăм! Кур! Некролог айĕнче!
Эх, тупата!.."

**Григорий МЕДВЕДОВСКИЙ**

# Литконсультант практикинчен

...Ак çулăмлă яш килчĕ ман пата.
"Поэт мĕнле пулас-ши?" - терĕ.
Ним чухлĕ тĕлĕнмерĕм, тупата.
Вутне çеç сÿнтерес килмерĕ.

"Пит йывăр эс суйласа илнĕ çул",-
Тесе ăнлантарма пикентĕм.

"Пӗлес тесессӗн пурнăçа эс пул
Ялан çын хушшинче",- эп сӗнтӗм...

Вăл таврăнчӗ тата ик эрнерен.
"Çак вăхăтра чăнах та ӗнтӗ, -
Хăрать хăй эп ӗненмесрен,-
Ку пурнăçра тем те вӗрентӗм!

Пултарăп халь поэма та çырма,
Тӗпчерӗм пурнăçа пит тарăн".
Ăна тӳр килчӗ асăрхаттарма:
"Вула классиксене, мăнтарăн".

Киле килсен, кӳреннӗ çын пекех,
Уçсассăн алăка каларӗ:
"Вуларăм пурӗ аллă кӗнеке,
Пуш вăхăтăм çеç сая кайрӗ!

Ман шухăшсем те, тема та çавах.
Пур рифма, калăпăш - куратăр.
Вуларăм эп... анчах та кăлăхах.
Мӗн классикăпа хăрататăр?

Вӗсемсӗрех тахçан поэт пулма
Май пурччӗ! Тăрăшрăм-ши камшăн?"
...Мӗнле сăмах тупас хуравлама,
Тата ăна ăçта ярам-ши?

**Борис ПАСТЕРНАК**

* * *

Чапа тухни вăл пит илемсӗр,
Чап çӗклемест пӗлӗтелле.
Архив пухни те - пӗр тӗллевсӗр,
Шур хутшăн мӗн чӗтремелле?

Ĕç - творчество тӗллевӗ санăн,
Шăв-шав та, çитӗнӳ те мар.
Пуш вырăн йышăнни вăл - намăс.
Ним çукшăнах ан калаçтар.

Суя ят йышӑнса ан пурӑн,
Пул тивӗç çын юратӑвне.
Сӑпайсӑр, намӑссӑр ан курӑн,
Илтсем пуласлӑх чӗннине.

Хӑвармалла кӑшт пушӑ вырӑн
Пурнӑçунта, хута тултар.
Алçырусен хӗрне кун-çулӑн
Пайӗсене туртса хӑвар.

Хуплатӑр шурӑ паллӑмарлӑх,
Унта уру йӗрне пытар,
Пытаннӑ пек тӑван тавралӑх
Тӗтре ӑшне. Ним ан кӑтарт.

Сан чӗрӗ йӗрӗпе иртеççӗ
Кайран шит хыççӑн шит çынсем.
Çӗнтернӗ е путланнӑ - эсӗ
Ӗçленӗ чух ним ан пӗлсем.

Пӗр чӗптӗм те çулран ан пӑрӑн,
Ан çухатсам сӑн-сӑпатна.
Пул вилӗмсӗр эс, чӗрӗ пурӑн -
Ыр ят тин пырӗ сан патна.

**М. КОРЮН**

## Ют çын ӑнӑçӑвӗ

(ЮПТАРУ)

"Кала, мӗн пулчӗ? Каç пек тӗксӗм эс тӑратӑн,
Шӑл витӗр сӑмахусене аран-аран çеç кӑларатӑн...
Савӑнмалла сан! Арӑму та сывӑ, чиперех,
Ху тӗрӗс-тӗкелех, хӗрне те качча патӑн!
Мӗн эс хурланнӑ? Намӑс?.. Ӗç?.. Чӗре?.."
"Мана мӗн пулнине пӗлес килет пулсан...
Пит лайӑх повесть çырнӑ эс...
Кӳренӗçӗн сӑлтавӗ çавӑ çеç!"

*Вырӑсларан Н. ЛАРИОНОВ куçарнӑ.*

# Халăх сăмахлăхě



# Чеелĕх пулмасан - телейӳ пулмĕ сан

Йĕлмел ялĕ - пысăк ял,
Темĕнле çынсем те пур.
Пур пуянĕ - чаплă ят,
Кăшт çукраххисем те пур.

Ашшĕ Чари Кĕçтукăн
Улпутсем патне пырса
Ыйтнă: «Эпĕ ĕçлекен,
Илĕр-ха мана тарçа».

Тарçăра ĕçленĕ чух
Кĕçтук ашшĕ мĕн курать:
Унăн хуçи - хытă чун
Пытарса укçа хурать.

"Мĕн тăвас-ха укçапа?
Пĕлнĕ вырăнта выртать".
Чăтрĕ, чăтрĕ те... Çапах
Укçана вăл йăкăртать.

Пĕр кĕсье укça чиксе
Вăл кунтан тухса тарать.
Йĕлмелне тăрать çитсе,
Лавккана кайма хăрать.

Укçа хисепне пĕлмест,
Аптăрать: «Ку укçана
Халь парам-ши мĕн илме?
Кăтартам-ха пĕр çынна».

Темиçе çĕр тенкĕлĕх
Кăларса Эрхип умне,
Кăтартма хурать. «Лĕх-лĕх», -
Пытарать леш куллине.

Вун тенкĕлĕхсем парса
Кĕçтук ашшĕне суять.
Мĕнпурне улăштарсан,
Çак Эрхип пичче пуять.

Вăхăчĕ иртет нумай.
Хай улпут укçа çинчен
Ас илет те: «Ай-ай-ай!
Çук укçа вырăнĕнче!»

Виçĕ лашине кӳлсе,
Ывăлĕ ун Йĕлмелне
Чуптарса пырса кĕрсен,
Кĕçтуксем патне килет.

Турăш хыçнелле тӳрех
Вăл пăхать пуçне пăрса.
Кĕçтук: "Халь аттесĕрех,
Тен, юлăпăр,- тет,- тăрса".

Ывăл укçана тупать,
Айăплине хăратмасть.
Алăкран тухса утать,
Ытти укçине ыйтмасть.

Çĕклемест вăл аллине,
Пĕр сăмах та каламасть.
Ырă çын кайма килне
Тухса ларать, шарламасть...

Кĕçтук ашшĕн чеелĕх
Çук, вăл чухăн пурăнать.
Пулмасассăн телейӳ -
Çапла ан шыра ăна.

## Вăйçă Кирукпа шуйттан

Тукасра, мăн урамра,
Шав нумай çын курăнать.
Начарах мар-мĕн сăнран
Вăйçă* Кирук пурăнать.

Пысăк, аслă туйсенче
Хăма купăспа калать,
Чаплă хăна умĕнче
Хăйне хавас тыткалать.

---

* Вăйçă - купăссă.

Унӑн хӑма купӑсӗ
Шӑпчӑк пек ҫинҫе юрлать.
Пит илемлӗ кӗввисем -
Ялӑн халӑхӗ ырлать.

Ҫын телейлӗ-ха хӑйле,
Пӗр телейсӗр те пулать.
Вӑйҫӑ Кирука темле
Тамаша ак ҫулӑхать...

Ҫур ҫӗр варринче пӗрре
Шухӑшсӑр ҫапать ыйха.
Тройка кӗҫ яла кӗрет -
Ырлӑха е хурлӑха?

Ҫын ҫуна ҫинчен анса
Чӳрече патне пырать.
Пуш аврипе шаккаса
Кирука туя йыхрать.

Тумланать тӑрса Кирук,
Тӑрантас ҫине ларать.
Тройка хускалать тӑрук,
Туй ӑна кӗтсе тӑрать.

Васкаса туя ҫитсен
Вӑйҫӑ вырӑнне ларать.
Купӑс каласа, пиҫсе
Халӑха савӑнтарать.

Купӑс туртса ывӑнсан
Кирука тулли черкке
Тыттарса калаҫҫӗ: «Сан
Паю ку, эс те лӗркке».

Ӗненет Турра Кирук.
Черккине ӗҫес тесе
Сӑхсӑхать те ак тӑрук
Кайрӗ ҫурӑм ҫӳҫенсе!

Ҫут ҫанталӑк улшӑнать,
Халӑх куҫран ҫухалать.
Вӑл курать шур шуйттана -
Ак кам ӑна улталать!

Кирук ларать çырмара,
Аллинче ун сивĕ пăр.
Урисем сивĕ шывра:
«Вакă вĕт ку! Пулăшăр!»

Кам сана çĕр варринче
Çырмана çăлма анать?
Хăвăртрах тăр пăр çинчен,
Ан ĕнен эс шуйттана.

Хай чупать Кирук килне,
Арăмне курсан чĕнет.
«Эсĕ кам? Сана пĕлмеп!» -
Арăмĕ ун тĕлĕнет.

Арăм çумĕнче выртсан
Тин Кирук кăшт ăшăнать.
Çывăрса ирпе тăрсан:
«Тĕлĕк çеç», - тет. Лăпланать.

Вăхăт кăшт иртсен каллех
Кируксен хапхи умне
Чарăнать пырса çĕрле -
Никам та пĕлмест камне.

Кантăкран шаккать патак,
Кирука тухма чĕнет:
«Кайрăмăр туя татах», -
Тăрантас ăна сĕнет.

Ак ларать Кирук туйра,
Вылятать хăй купăсне.
Хăнана савăнтарать,
Нимĕн те килмест асне.

Ташă-кĕвĕ чарăнсан
Тыттараççĕ пĕр черкке:
«Пыру типрĕ пулĕ сан,
Яр ĕçсе веç, шĕвĕркке».

Вăйçă Кирук сăхсăхать,
Веç ĕçме хатĕрленет.
Çухалаççĕ йалт. Пăхать -
Картара вăл! Тĕлĕнет.

Аллинче каллех шăн пăр.
«Кам карти-ши ку тата?
Вăрă тейĕç. Кирук, тăр.
Пултарать лекме патак».

Вăл, хăйне çапла хушса,
Сурăх çумĕнчен тăрать.
Юлчĕ шуйттан çуйхăшса,
Килнелле Кирук тарать.

Арăм алăка уçать,
Кирук нимĕн каламасть.
«Эс ăçта çӳрен, хуçа?
Шап-шур юр - çук паллама».

Темиçе хут ак çапла
Вăйçă Кирук арпашать.
Парăнать вăл усала,
Савăнать шуйттан, ташлать.

Хăма купăс усала
Илĕртет-ши? Кам пĕлет...
Вăйçă çӳçĕ шуралать,
Канăçлăх, телей пĕтет.

Ан тустарăр пуçăра,
Айăпĕ веç вăйçинче:
Юратса эрех-сăра
Шутсăр ĕçнĕ туйсенче.

Туйсенче çӳре-çӳре,
Аншарли ĕçе-ĕçе
Вăйçă кайнă шур чире.
Шуйттанпа халь хирĕçет.

Е чăнах, е шӳтлесе -
Ял çинче чапа тухать.
Курнă эп шуйттан тесе
Калаçса çынсем пухать...

Тытăнать патша вăрçи,
Çухалать Кирук çарта.
Çĕн Йĕлмелти туй вăйçи
Пурпĕрех асăмăрта.

Ку истори те вĕçне
Çывхарса, пĕтсе пырать.
Арăмĕ ун купăсне
Кӳршине сутса ярать.

# Телей ҫулӗпе



# Забастовка

Вера Пантелеймоновна Лисицына, ресторан директорě, вăтам çулсенчи кĕрнеклĕ тушкаллă, тулли питлĕ хĕрарăм. Паян ăна ĕçе, яланхи пекех, «Волга» машинăпа илсе килчĕç . Вера Пантелеймоновна хуллен кăна машина ăшĕнчен йăраланса тухрĕ те, васкамасăр, пушмак тĕпĕпе асфальта хыртарса, алăк патнелле утрĕ. Алăк çине кнопкăсемпе тыттарса хунă хута курах кайрĕ. Унта: «Паян ĕçлеместпĕр, забастовка пуçлатпăр», -тесе çырса хунă. Ку мĕне пĕлтерекен япала? Кам шутласа кăларнă ăна?! Директор ресторана хыçалти алăкран кĕрес шутпа картишнелле çул тытрĕ. Ĕçлекенсем те веçех кунта иккен. Ăна никам та, кашни кунхи пек, ăшшăн сывлăх сунса кĕтсе илмерĕ. Çăварĕсене шыв сыпнă пекех тăраççĕ пухăннисем.

- Мĕн япали ку, мĕнле мыскара? Мĕн хăтланатăр эсир? - ыйтрĕ аптраса ўкнĕ директор, куçĕсемпе кашнин çине шăтарасла пăхса.

Унччен те пулмарĕ, Юля, ыттисенчен çивĕч чĕлхеллĕрех официантка, малалла тухрĕ те хыпăна-хыпăна калаçма пуçларĕ:

- Çитет кун пек пурăнса! Малашне çынла пурăнма тытăнатпăр, вăхăтпа пĕрле утса пымалла. Паянтан сроксăр забастовка пуçлатпăр. Эпир ытти çынсенчен катăк-им вара? Шахтерсем, учительсем, врачсем тата ыттисем те забастовка тăваççĕ вĕт. Пирĕн ирĕк çук-им ун пек тума? Ĕç укçине пилĕк хут ўстерме, ĕç условийĕсене лайăхлатма ыйтатпăр, çын тўсейми йывăрлăхсенче ĕçлеме килĕшместпĕр урăх. Иртнĕ эрнере çынсенчен улталаса пуçтарнă укçана та çуррине илтĕр, малтан калаçса татăлнă пек, виççĕмĕш пайне кăна мар. Киле кайнă чух та вăрланă апат-çимĕçсене илсе тухма йывăрланчĕ. Комисси çине комисси, ухмахах тухатпăр пулмалла вĕсенчен хăраса. Сывлăхшăн сиенлĕ пула пуçларĕ ку ĕç. Лиза ав икĕ уйăх каялла ĕçе кĕнĕскер, милици çыннисем аллинчен аш сумкине туртса илсен хăранипе тăнне çухатрĕ. Мĕншĕн ăна вăрлама вĕренсе çитеймесĕрех хĕсĕрлетĕр, кам тавăрса парать ун сывлăхне? Нинăна та тăватă кун ĕçе тухайманнишĕнех кăларса яраспа хăрататăр. Ун патне виççĕмĕш упăшки килнĕччĕ вĕт хăнана. Тăван упăшкине пăрахса ăçтан ĕçе тухтăр ĕнтĕ вăл? Пурнăç хăйĕннех тăвать. Виçĕмкун эпир ĕçре ўсĕр пулнăшăн та кăмăлсăрлантăр. Хăвăрах пĕлетĕр вĕт, ун чухне Светлана поварăн йăмăкĕ хваттер илнĕччĕ. Çавна кăштах çурăмăр кăнтăр вăхăтĕнче. Эсир ун йăмăкне лайăх пĕлетĕр, пĕлтĕр туй тума тесе пĕр тушка аш илсе кайрĕ ресторантан. Кайран çав аша холодильник çĕмĕрĕлнипе пăсăлнă тесе акт çырса пăрахăçларăмăр. Иртнĕ эрнере пĕр клиент котлет ăшĕнчен шăна тупса каялла йăтса килсен те эсир ман çине сивĕ куçпа пăхрăр. Эпĕ кăна айăплă мар вĕт кунта. Аш авăртнă вăхăтра дихлофоспа Люда сапса çўрерĕ кухньăра. Çитет текех мăшкăл тўсме! Ытти ресторансене те пирĕнпе пĕрле хутшăнса забастовка пуçлама чĕнетпĕр.

«Вăт сана! Мĕн пулнă кусене? Мĕнле шăна сăхнă? Веçех Юля ĕçĕ ку. Вăл хăш-пĕр чухне кăмăлсăрланнине сисрĕм те-ха. Ĕлкĕреймерĕм эпĕ ăна ĕçрен кăларма, шел, çавăншăнах халĕ пăтăрмах куратăп. Кирлĕ пулсан темле сăлтав та тупма пулать, çитеймерĕм-ха ун патне. Варвара Григорьевнăна ав пенсие кайма çулĕ çитсе пыратчĕ пулин те, кăларса ятăм. "Ытлашши иртĕхер мар-ха, кашни япалан виçи пур",- тесе мăкăртатма пăхатчĕ вăл. Ыттисем мĕншĕн Юля хыççăн сикеççĕ-ха, мĕн çитмест вĕсене? Сахал апат-çимĕç

йӑтрӗҫ-и килӗсене? Апат-ҫимӗҫне Юля мар вӗт, эпӗ панӑ. Е манса кайрӗҫ-и? Пӗтрӗ ман авторитет, пуҫлӑхсем умӗнче намӑс тӑваҫҫӗ мана», - вӗлтлетеҫҫӗ шухӑшсем Вера Пантелеймоновна пуҫӗнче. Унтан вӑл хӑйне хӑй алла илчӗ те сасӑпа ҫепӗҫҫӗн калаҫма пуҫларӗ.

- Чимӗр-ха, юлташсем. Аҫтан ку кирлӗ мар япалана шухӑшласа тупрӑр? Мана пӗтӗм трест умӗнче намӑс кӑтартатӑр вӗт. Атьӑр, калаҫса татӑлар-ха шӑкӑл-шӑкӑл, яланхи пекех. Ку эрнере сиртен укҫа пуҫтармастӑп, хӑвӑр валли юлтӑр веҫех клиентсенчен шахвӑртса илнӗ укҫа. Иван Иваныч та халӗ канура. Тепӗр уйӑхра парӑпӑр ӑна парӑма. Клиентсене пӗлсе улталӑр, ан сисчӗр. Ытларах ӳсӗрсене ҫаратӑр. Складри икӗ тушка ашран пӗрне хӑвӑр валли пайлӑр. Астӑвӑр, пурне те пӗр пек пултӑр, хӑнӑхнӑ тӑрӑх, пӗр-пӗрне ан улталӑр. Ун вырӑнне тепӗр тушкине хаклӑрах хакпа сутӑпӑр, пӑши ашӗ тейӗпӗр. Пӗркун чирлӗ вӑкӑр ашне зубр тесе виҫӗ хут хаклӑрах сутрӑмӑр вӗт, никам та пӗр сӑмах калакан пулмарӗ. Халӗ те ҫавӑн пек тӑвӑпӑр. Халех виҫшер кӗленче коньяк паратӑп кашнине. Ҫынсене уншӑн тата та сахалтарах ярса пама тивет сирӗн. Икҫӗр грамм вырӑнне ҫӗр ҫитмӗл грамм, ҫӗр грамм вырӑнне сакӑрвунӑ грамм кӑна ярса парӑр. Комисси, ОБХСС тетӗр. Мӗнех вара вӗсем?! Тӗрӗсленӗ ятне кӑна тӑваҫҫӗ, ӗҫ тунине кӑтартмалла вӗсен. Эсир вара хӑраса, аптраса ӳкнӗ. Эпӗ вӗсене килнӗ-килмен апат-ҫимӗҫ, эрех-коньяк парса тултарса хуратӑп - пурин те тутлӑ ҫиес килет вӗт. Ун-кун ҫаврӑнкаласа ҫӳреҫҫӗ те хӑйсемех машина ҫине тухса лараҫҫӗ, килнӗ ҫулпалах каялла каяҫҫӗ. Ну, мӗн хытса тӑратӑр? Атьӑр склада, сумкӑрсене кӑларӑр, мӗн кирлине веҫех илӗр!

Вера Пантелеймоновна склад алӑкӗн пысӑк ҫӑрине уҫрӗ те хӑлӑпран туртса хӑйклаттарчӗ...

Ҫав вӑхӑтра вӑл вӑранса кайрӗ. Упӑшки кухня алӑкне уҫса шыв ӗҫме кӗрет иккен. Сиксе чӗтрекен директор хӑвӑрт кӑна вырӑн ҫине тӑрса ларчӗ, хашлаттарса сывласа ярсан, ҫамки ҫине тапса тухнӑ шултра тар тумламӗсене утиялпа шӑлса илчӗ.

# Паллайман

Канмалли кун. Ҫерушпа Петӗр Санюк патне кайма шутларӗҫ - мӗнлетӗр ирттерсе ямалла вӗт ӑна. Ӗҫ ҫук, тӗрӗсрех каласан, ӗҫлесех те килмест. Ав хулара мӗн чухлӗ ҫын усӑсӑр каллӗ-маллӗ утать. Ҫерушпа Петӗр унталла-кунталла утса ҫӳресе вӑхӑта сая ярасшӑн мар. Вӗсен "ӗҫ" пур, Санюк валли те тупӑнать. Ҫитнӗ-ҫитменех виҫҫӗшӗ эрех кӗленчине пӗр самантрах типӗтрӗҫ. Сахал пулчӗ-ха ку. Санюк тепре кӑларчӗ. Туссем ӑна та, такам туртса илесрен хӑранӑ пек, васкаса пушатрӗҫ. Сӑмсисем кӑшт хӗрсен: «Атьӑр, Миккуль патне каятпӑр, унӑн пурах ӗнтӗ. Нумаях пулмасть ачи ҫуралнӑ, хваттерне те ҫутарман-ха вӑл пире. Кӑмӑлне ҫемҫетме ҫул майӗн пӗр четвӗрт сӑра кӗрсе илсе тухӑпӑр. Кунтан инҫех мар, лавкка ҫумӗнчи киоскра сутаҫҫӗ», - терӗ Петӗр. Унтан пушӑ четвӗрт кӗленчине илсе сӑра киоскӗ патнелле утрӗҫ.

Вӗлле хурчӗсем пекех сӗрлеҫҫӗ унта арҫынсем. Канмалли кун вӗт - канас килет. Хӑшӗсем черетсӗр илесшӗн тавлашаҫҫӗ, теприсем паллана

çыннисене курнă та вĕсем çумне черете тăрасшăн.

Виçĕ тусăн та черете тăрса вăхăта сая ярас килмест. Ав мĕн тăршшĕ вăл, унта тăрса çур кун иртсе кайĕ. Миккуль патне те ĕлкĕреймессе пултараççĕ.

- Петĕр, эсĕ чи вăйли, чи паттăрри. Пуш кĕленчене ил те сăра сутакан чӳрече патнелле сĕкĕн. Эпир сана хыçалтан хĕсĕрлесе пырăпăр, - терĕ ырхан Çеруш.

Петĕр четвĕрте çĕклесе тытрĕ те умра тăракансене кăкăрпа хирме пуçларĕ. Халăх пушшех те шавлама тытăнчĕ. «Ăçта тĕртетĕр, эпир кунта икĕ сехет тăратпăр, килтĕр кăна вĕт-ха», - илтĕнчĕ ушкăнран.

Туссем тата шаларах хирĕнчĕç. Унччен те пулмарĕ, Петĕре пĕр çамрăк кăкăрĕнчен ярса илчĕ те каялла тĕртме тытăнчĕ. Çакăн пек намăса чăтать-и Петĕр?! «Ме сана!» - терĕ вăл лешне, чышкăпа тăрăнтарса. Каччă хирĕç сулса ячĕ те, Петĕр куçĕнчен вут-хĕм сирпĕнчĕ. Çапăçу-тĕркĕшӳ пуçланса кайрĕ. Çак вăхăтра Петĕре пĕри хыçалтан сулăнса çапрĕ те, унăн куçĕсем пĕр самантрах хупланчĕç. Кăштах тăна кĕрсен хыçалалла çаврăнса пăхрĕ те, аран-аран куракан куçĕсем çамки çинех хăпарса ларчĕç! Ара, Юрик вĕт ку, аппăшĕн аслă ывăлĕ!

- Юрик, мĕн тăватăн эсĕ, кама çапатăн?! Куккуна та палламастăн-и?! - тесе кăшкăрса ячĕ.

- Эх, кукка, эсĕ пултăн-и ку, каçар, паллаймарăм! Вăхăчĕ те пулмарĕ пăхса тăма. Эсĕ манăн юлташпа тытăçса кайрăн. Эпĕ ăна пулăшас терĕм, - айăпне тикĕслеме пăхрĕ Юрик.

Унтан иккĕшĕ те пĕр-пĕрне алă пачĕç те кулса ячĕç. Черетри халăх шăпланчĕ, ним ăнланмасăр вĕсем çине тинкерчĕ.

# Кĕвĕçтересшĕнччĕ те...

Гриша вунă çул ытлă ĕнтĕ «Спортлото» вăййине вылять. «Ан тив, çынсем çанă тавăрса ĕçлеччĕр укçа тăвассишĕн, эпĕ вара цифрăсем тĕрĕс тупсах пĕр самантра вĕсенчен пуян пулса тăрăп», - шухăшлать вăл. Анчах телей тени çакланмарĕ-ха хальччен. Çак хушăра икĕ хутчен виçшер тенкĕ, пĕрре çичĕ тенкĕ выляса илме пултарчĕ. Ĕçри юлташĕсем тăрсан-тăрсан тăрăхласа кулса та илеççĕ: «Мĕскер, Гришук, хăçан пире выляса илнĕ машинупа лартса çӳретĕн? Е каллех катăк çур пус кăна выляса илтĕн-и?»

Ытла та тарăхса çитнĕ Гриша иртнĕ тиражра вылява тухнă номерсене хаçатран улттăшĕнчен пиллĕкĕшне тĕрĕс çырса илсе, ĕçри юлташĕсене кăтартма каять. Ĕнентерме хаçатне те пĕрле илет. «Кĕвĕçтерсе чунĕсене ыраттарас-ха, йĕкĕлтешсе ан çӳреччĕр пĕреххут», - шухăшлать вăл.

Юлташĕсем патне çитсен мăнкăмăллăн: «Акă курăр! Кăлăхах култăр манран, пилĕк номерне тĕрĕсех тупрăм. Часах пĕр холодильник илмелĕх укçа та пулĕ», - терĕ вăл. Лешсем ăна: «Ну, пулчĕ, паян пĕтĕм бригадипе ятсене манса кайичченех ĕçетпĕр! Кăнтăр хыççăн ĕç укçи те параççĕ, кĕрсе ил, Гриша», - терĕç. Лешĕ нимĕнех те шарламарĕ, халь çеç мăнкăмăллăн пăхакан пит-куçĕ кăштах салхулланчĕ. Смена вĕçленсен Гриша васкаса

урамалла сирпĕнсе тухрĕ, килнелле ҫул тытрĕ. Анчах пăрăнчăкра ăна пĕтĕм бригада кĕтсе тăрать иккен.

- Атя, Гриша, холодильника ҫумаллах пулать ĕнтĕ. Ĕҫ вĕҫленессе аран кĕтсе илтĕмĕр. Килӳнте е ресторанра савăнăпăр?

«Вăт ҫыпăҫрĕҫ-тĕк ҫыпăҫрĕҫ. Мĕн ухмахланса суйрăм-ха кусене? Арăм пĕлсен!.. - пăшăрханчĕ вăл. Ҫапах та мăнаҫлăхне ҫухатасшăн пулмарĕ...

Ресторан хупăничченех савăнчĕҫ тытман упа тирне сĕвекенсем. Мĕн тăвăн? Намăса юлас мар тесен пĕр уйăх укҫи те шел мар. Ҫăварăнтан тухса кайнă сăмах вĕҫен кайăк мар, тытаймăн. «Спортлотори» телее тытатех-ха Гриша!

# Дежурство

- Алло, алло! Эпĕ - вунвиҫҫĕмĕш! Эпĕ - вунвиҫҫĕмĕш! Ҫыхăнăва тухатăп. Капитан юлташ, дежурство чиперех иртсе пырать. Нимĕнле йĕркесĕрлĕх те курмастпăр. Тяпкин ефрейторпа Халтурин ураменче лаpатпăр... Мĕншĕн лаpатпăр?! Шухăшлатпăр, бензин пĕр ҫаврăм тума ҫитĕ-ши е ҫитеймĕ-ши?.. Ну, юрĕ, кайрăмăр. Теветкеллĕх - пархатарлă ĕҫ. Капитан юлташ, Коммунизм проспектне пăрăнса кĕтĕмĕр, хуллен пыратпăр... Мĕн сасси ку? Кам пулăшу ыйтать унта?.. Куртăмăр, виҫĕ тăсланкă пĕр хĕрарăм аллинчен сумкине тăпăлтараççĕ иккен. Парăнмасть лешĕ, пĕтĕм вăйĕпе турткаланать, маттур... Мĕншĕн хĕрарăма пулăшмастпăр тетĕр-и? Вара виҫҫĕн вĕт вĕсем, эпир Ваҫҫапа иккĕн кăна... Апла пулсан тытатпăр, халех. Вĕсем икĕ «Тойотăпа», тарчĕҫ ĕнтĕ... Номер? Ҫук номерĕсем... Халех хăваласа ҫитетпĕр... Ай, шуйттан машини, мĕскер пулчĕ тата? Сӳнсех ларчĕ... Мотора ҫыхса хунă вĕрен татăлса кайнă иккен. Ҫиччас ботинка шнурне салтса илсе сыпса хуратăп... Акă пулчĕ те, пурте йĕркеллĕ... Малалла пыратпăр. Камсем кăшкăраççĕ унта, мĕнле шăв-шав ку? А-а, ҫамрăксем ҫапăҫаççĕ, пĕр-пĕрне сике-сике тапаççĕ. Капитан юлташ, мĕн тумалла?.. Сыхланатпăр, сыхланатпăр. Кабина алăкне шалтан авăркăчпа сăлăпласа хутăмăр, кĕрейместĕ вĕсем кунта. Хамăр сывлăх - хамăр алăра... Пистолет? Пĕтĕм милици уйрăмĕпе те пĕрре кăна вĕт вăл, пирĕн черет икĕ эрнерен ҫитет... Ой, машина чӳречине ҫапса ҫĕмĕрчĕҫ чулпа! Атя, кайрăмăр кунтан, кайран килсе выртса юлнисене пуҫтарса кайăпăр-ха... Чӳречесĕр сивĕ пулать тетĕр-и? Ҫук, пирĕн тормоз ҫук вĕт, тăрăнасран хăраса пынипе ҫамка ҫинче тар тухса пырать... Ваҫҫа, ме-ха пистолет кабурине, ав, лере карчăксем кавăн вăрри сутаççĕ, тултарса кил-ха туллиех. Хĕвел ҫаврăнăш тĕшши пур тетĕн-и? Тăк кăларса урама, чĕрĕлсе кайнă вăл. Иртнĕ эрнерех илнĕччĕ ăна.

Алло, алло! Ваҫҫа джинсă шăлаварне ҫурса ячĕ алăк тыткăчĕпе... Мĕнле джинсă? Ваҫҫан милици форми ҫук вĕт, пĕлместĕр-им вара? Тепĕр ҫул Пеньков старшина пенсие кайсан пулать те-ха... Каллех машина сӳнсе ларчĕ, мĕн япали ку? А-а, бензин пĕтнĕ. Каларăм вĕт пĕр ҫаврăм тума ҫитмест тесе. Ҫиччас тупатпăр бензин... Пулчĕ те, тупрăмăр. Пĕри «УАЗикăн» хыҫалти ларкăчĕсене хывса парсан пысăк витрепех ярса пачĕ. Халĕ рынок вĕт. Ҫĕнĕлле пурăнма вĕренмелле, хăвăн ҫине шанмалла. Умĕнчи ларкăчсене хывса

парсан тепĕр витре бензин паратăп тет. Çук, килĕшмерĕмĕр. Мĕн, эпир сĕм ухмах-и элле? Кайран витресем çинче ларса çӳремелле-и вара пирĕн Ваççапа?.. Хыçалтисене мĕншĕн хывса патăр? Вĕсем çинче пурпĕрех никам та ларса çӳремест, дежурствăна эпир икĕ çынран ытла нихăçан та тухман... Пирĕн умра такам пысăк хăвăртлăхпа чупса пырать. Чун сисет, ырă çын мар ку. Халех тытса чаратпăр, тĕрĕслетпĕр... Спортсмен пулса кайрĕ вăл, тренировкăра. Кăкăрĕнчен ярса илсен пӳрнипе тăнлавĕ çине тĕллесе кăтартрĕ...

Ай-ай, мĕн ку?! Машина тайăлса кайрĕ, пĕр енне туртма пуçларĕ... Урапа шăтнă иккен... Ак хайхи, запас урапа çук! Халтурин урамĕнче ларнă вăхăтра темле шĕвĕрккесем хывса кайрĕç пулĕ. Юрĕ, кунта инçе юлмарĕ ĕнтĕ, çаплипех çитĕпĕр... Чимĕр-ха, пирĕн еннелле пушар машини васкаса килет. Аçта-тăр пушар пулĕ... Ваçça, пăх-ха, мĕншĕн пирĕн пата çитсе чарăнчĕ вăл? Мĕн пулнă-ши?.. Çунать?! Урапа?! Мур илесшĕ, çитсе пулмасть иккен паян, хăçан пĕтет ку дежурство?! Алло, алло! Капитан юлташ! Алло, алло! Çĕр çăтман, каллех раци çĕмĕрĕлчĕ!.. Мĕн тарĕ юхать пит тăрăх? Фу-у!

# Йывăр рейс

Хĕллехи сивĕ кун. Ӳпрелĕнчи автостанци умĕнче тăратпăр. Пирĕн Чĕмпĕре каймалла. Халăх акатуйри пекех хĕвĕшет: шалта та лăках тулнă, тулта та пĕр-пĕринпе чышăнмасăр утса иртме çук. Урăхла каласан, автостанци кăткă тĕмине аса илтерет.

Паян вырсарникун, çавăнпа çынсем пушшех те нумай. Хулара ĕçлекенсем канмалли кунсене яла килнĕ, халĕ каялла таврăнаççĕ. Район центрĕ пулнă май, кунта темиçе ял çыннисем пуçтарăннă. Автобуссем вара çителĕксĕр. Расписани тăрăх тата икĕ автобус килмелле, çыннисем виçĕ автобуса та кĕмеççĕ.

Сасартăк халăх ытла та шавласа кайрĕ. Такам: «Килет!» - тесе кăшкăрса ячĕ. Чăнах та, инçетрен хĕрлĕ «Икарус» курăнса кайрĕ. Шыв çинче ишсе пынă пек, автостанци умне çитрĕ, пăрăнчăкран кĕрсе кайрĕ те пирĕн енне çаврăнса шыв юхма тунă канав хĕррине çитсе чарăнчĕ. Мĕн пуçланчĕ кунта! Калăн, кăткă тĕми çине кам-тăр пусса иртсе кайрĕ. Çак самантра культурăпа этика валли вырăн çук: кам вăйлăрах тата правуртарах - çавăн автобуса кĕме шанчăк пысăкрах. Тепĕр автобуса никам та кĕтмест, шанмасть, пурте халех каясшăн. Мĕншĕн тесен юлашки килме те, килмессе те пултарать. Ытла тӳсейменнисем машина чарăниччен ун çумне тăрса чупса пычĕç, ăшне кĕрсе кайма меллĕрех вырăн йышăнасшăн. Транспорт чарăннă-чарăнманах çынсем чупса çитсе ун çинелле чышăнчĕç, лешĕ, пăр çинче лараканскер, хĕрринелле шуса кайрĕ, канава анса ларчĕ, чалăшрĕ. Шалта ларакансем çухăрашма, кăшкăрашма тытăнчĕç. Водитель алăкĕсене уçса ячĕ, хутлă-хутлă сăмахсемпе кăшкăрса вăрçма тытăнчĕ. Чĕмпĕртен килекен пассажирсем тухса та пĕтеймерĕç - каякан çынсенчен икĕ каччă салона кĕме те ĕлкĕрчĕç. Мĕнле тетĕр-и? Чӳречерен! Хăйсем хыççăн шăлаварлă пĕр чиперккене сĕтĕрсе кĕртрĕç. Хĕр форточкăран, çĕлен пек, авкаланса кĕрсе кайрĕ. Ав мĕншĕн шăлавар тăхăннă иккен вăл, чӳречерен кĕнĕ чух вăтанмалла ан пултăр тенĕ ĕнтĕ. Çийĕнче те куртка кăна - килĕнченех хатĕрленсе килнĕ автобус ăшне кĕме. Тепĕр каччă та çак меслетпех кĕрес терĕ пулас, форточкăран

сиксе уртăнчĕ. Анчах чӳрече хăй тăпсинчен тухса кайрĕ, çĕрелле персе анчĕ. Çăмăл алă-ураллисем валли ку кĕтмен çĕртен парне пекех пулчĕ, темиçе çын уçă вырăнтан шалалла сиксе те кĕчĕç. Салон хăш вăхăтра тулса та ларчĕ, анчах хыçалтан чышăннăçемĕн чышăнаççĕ. Эпир юлташпа, пĕрре юхăма лекнĕскерсем, шала кĕтĕмĕр. Чăтма çук хĕсĕк, аяк пĕрчисем шатăртатаççĕ, куçран хура ункăсем тухаççĕ. Пулă çырана тухса ӳксен сывланă пек, çăварсене çӳлелле тытса сывлăш çăтма тăрăшатпăр. Урама тухнă водитель ним тума пĕлмест: пĕрре канава анса кайнă урапине пырса тапать, тепре тухса ӳксе çĕмĕрĕлнĕ чӳрече патне вăркăнать. Канавĕ тарăнах пулмасан та, машина унтан хăй тĕллĕн тухаймастех. Водитель иртсе каякан трактора чарса пулăшу ыйтрĕ. Автобуса тракторпа çаклатсан, шофер çынсене автобус çăмăллантăр тесе тухма ыйтрĕ. Ăçта унта! Кам тухать! Никамăн та ик-виç минут каялла иртнĕ саманта тепĕр хут тӳссе ирттерес килмест. Водитель çилленипе çынсен пуçĕсем, хулпуççисем çинех уртăнчĕ, вĕсем урлă хăй вырăнне çитрĕ. Ай-ай-ай! Кабина туллиех çын. Водителĕн ларкăчĕ çинче икĕ арçын ларать, хăй валли те ларма вырăн хăварман...

Автобуса тикĕс çĕре сĕтĕрсе кăларсан, водитель пулăшакансене тав турĕ. Салонра çаплах кăшкăрашаççĕ, ахлатаççĕ. Мĕн кăна илтместĕн кунта:

- Кăлар аллуна ман кĕсьерен, санăн мар вăл!..

- Печчюк, кунталла кил, сан валли вырăн йышăнтăм!

- Выртса пымалли вырăн йышăннă пулсан та пыраймастăп, хĕстерсе хучĕç... Пурпĕрех никама та ан ларт!..

- Сумка! Манăн сумка ăçта-ши?! Тыткăччи кăна юлнă алăра...

- Сулахай алла парăр-ха кунталла. Ăçта сĕтĕрсе каятăр?!

Кĕрейменнисем алăк умĕнчех тĕркĕшеççĕ-ха. Пĕр арçын, хăрах урипе картлашка çине пуснăскер: «Тархасшăн, çур çын валли те пулин вырăн тăвăр-ха», - текелесе тĕртет малтисене. Ун çумĕнче тăракан арçын: «Садистсем! Хăйсем кĕрсе тăчĕç, пирĕн çинчен шутламаççĕ те, кăкăр туллиех сывласа тăраççĕ. Атьăр-ха, кăкăрти сывлăша вĕрсе кăларăр, ман валли вырăн тăвăр. Сирĕн кăна каймалла мар вĕт!» - тесе кăшкăрать. Икĕ каччă картлашка çине пусма та çуккине тавçăрса илчĕ. Пĕри унта тăракан арçыннăн çăмламас çĕлĕкне пуçĕнчен туртса илчĕ те çĕре пăрахрĕ. Лешĕ çĕлĕк хыççăн тапаланса аннă вăхăтра иккĕшĕ те пĕрер урипе картлашка çине пусрĕç. Аптранă кăвакал кутăн чăмнă теççĕ. Каяссу килсен, мелне шутласа тупатăнах. Çĕлĕк хуçи кĕрешĕве малалла тăсма хăюлăх çитереймерĕ пулас: хăйпе хăй каласса айккинелле утрĕ.

Юрĕ, мĕнле пулсан та ларма пултарнă çынсене çитес çĕре илсе çитермелле вĕт-ха. Автобус алăкне мĕнле хупмалла тата: çынсем, çыхăри сухансем пекех, çакăнса тăраççĕ. Хăраса ӳкме кирлĕ мар, водителĕн алăк хупмалли "асамлă патак" пур. Вăл хыçалти алăк патне пычĕ те кĕсйинчен булавка туртса кăларчĕ, картлашка çинче тăракан çынсен урисенчен, купарчисенчен васка-васка чышса тухрĕ. Лешсем: «А-а-а!!!» - тесе хаяррăн кăшкăрса ячĕç, юлашки вăйĕсемпе малалла талпăнчĕç. Çак вăхăтра «асамçă» алăка шаплаттарса хупса та хучĕ. Çур ĕç пулчĕ тейĕпĕр. Малти алăка мĕнле хупас? Çак меслетпе хупсан, хăйĕн те тула юлма тивет. Çук, кабинăна мĕнле-тĕр кĕрсе юлмаллах. Хăй вырăнне аран çитрĕ вăл, хĕсĕнкелесе вырнаçса ларчĕ те машинăна алăкне хупмасăрах тапратрĕ.

Салонра нумайӑшӗ хӑрах ура ҫинче тӑраҫҫӗ , пӑркаланма та май ҫук. Пичкери килькасен те пӗр-пӗрин хушшинче пушӑ вырӑн нумайрах пулӗ. Автобус нумай та каяймарӗ, аслӑ ҫултан пӑрӑнчӗ те урӑх еннелле ҫул тытрӗ. Варринче тӑракансене нимӗн те курӑнмасть. Халӑх пӑлханма пуҫларӗ. Чарӑнтӑмӑр та, куратпӑр: эпир районти милици уйрӑмӗн картишӗнче! Мӗнле ӑнланмалла кӑна? Е пурне те хупса хурасшӑн-и?!. Паккуйӗсем те ҫитмӗҫ! Темех мар иккен: водитель алӑка хупма кӗчӗ кунта. Вӑл ыйтнипе темиҫе милиционер самантрах ӗҫе пикенчӗҫ: алӑк патӗнче пӗр-пӗринчен ҫакӑнса тӑракан ҫынсене пӗрерӗн-пӗрерӗн сӗтӗрсе антарчӗҫ. Алӑк хупӑнчӗ. Аслӑ ҫула тухса Чӗмпӗрелле вӗҫтертӗмӗр. Пӗр ура ҫинче тӑрса пыратӑп пулин те, ӑшра савӑнатӑп: икӗ сехетрен хулара пулӑп, ыран ӗҫе вӑхӑтлӑ кайӑп.

Ытти чухнехи пекех, 20-30 ҫухрӑм кайсан машина ҫул хӗррине чарӑнчӗ, унӑн хуҫи пиртен ҫул укҫи пуҫтарма тытӑнчӗ. Билетне памасть. Тен, ӗҫӗнчи «сиенлӗхсемшӗн» ҫеҫ пуҫтарать укҫине. Пассажирсем чӗнмеҫҫӗ: вӗсене хут татки мар, ҫитес ҫӗре хӑвӑртрах ҫитни пахарах.

Малалла ҫил шӑхӑрттарса пыратпӑр. Унччен те пулмарӗ, ҫул ҫинче аллисене хӗрлӗ хӑю ҫыхнӑ хӗрарӑмсем курӑнса кайрӗҫ, аллисенчи йӗрлӗ-йӗрлӗ туйине тӑсса чарӑнма хушрӗҫ. Водитель ҫухалса каймарӗ, билетсен рулонне туртса кӑларчӗ те ҫынсем енне хыҫалалла тайӑлса: «Мейӗр, илӗр, валеҫӗр хӑвӑрт кӑна кашнине», - терӗ. Ҫапла аппаланса пырса контролерсем патӗнчен иртсе кайрӗ - вӑхӑта тӑсать ӗнтӗ. Чарӑнсан темиҫе самантран икӗ хӗрарӑм васкаса салона кӗрсе тӑчӗҫ, водителе тӑруках "мӑйракаран" ярса тытрӗҫ:

- Е тормоз япӑх ӗҫлет-и? Юсамалла. Ӑҫта кайма ҫакӑн чухлӗ ҫын тултартӑн? Калӑм укҫине те пирӗнпе пайламасӑрах иртсе каясшӑн. Акт ҫыратпӑр.

- Икӗ пассажир ҫапӑҫса кайнӑччӗ, вӗсене чарма хыҫала кайнӑччӗ, ҫавӑнпа сире юлашки самантра ҫеҫ куртӑм, асӑрхамасӑрах иртсе каяттӑмӑр», - тӳрре тухрӗ лешӗ.

Контролерсем тек нимӗн те каламарӗҫ, тухрӗҫ. Пӗрле «ҫапӑҫакансене уйӑракана» та чӗнчӗҫ. Лешӗ шӳтпе кӑна хӑтӑласси пулманнине ӑнланчӗ, укҫа енчӗкне илсе вӗсем хыҫҫӑн тухрӗ. «Акт ҫырма» вӑхӑт нумай кирлӗ пулмарӗ, часах малалла вирхӗнтӗмӗр. Анчах мыскарасем ҫакӑнпа пӗтмерӗҫ-ха.

Хулана ҫитсе пыраттӑмӑр, каллех чарӑнма тӳр килчӗ. Машина тайӑлса ларчӗ. Водитель кӗрӗкне тӑхӑнса тулалла тухрӗ, пӗшкӗнсе аялалла пӑхрӗ. Ытла йывӑр пулнипе амортизаци системи шӑтнӑ иккен, машина ҫӗр ҫумне перӗнес пекех ларать. Водитель ӑпӑр-тапӑр инструменчӗсене илчӗ те машина айне хӗсӗнкелесе кӗрсе ҫухалчӗ. Пушӑ вӑхӑт пуррипе усӑ курса, хӑш-пӗрисем ҫул хӗррине тухса тӑчӗҫ, чикарккӑ тивертсе ячӗҫ. Кӑштах аппаланнӑ хыҫҫӑн шофер каялла тухма пикенчӗ. Ҫук, тухаймасть вӑл! Ун валли шуса тухма хушӑк та юлман: машина тата ытларах анса ларнӑ. Шалта кӗрӗкне мӗнле хывнӑ-тӑр - ӑна урисемпе тулалла тапа-тапа кӑларчӗ. Хӑй тухаймасть. Мӗн тумалла?!

- Салона кӗрӗр те урайӗнчи люкӑн тимӗр виттине уҫӑр, эпӗ ҫавӑнта шуса пыратӑп,- илтӗнчӗ аялтан.

Ҫынсем вӑл каланӑ пек турӗҫ, хӑшӗсем люкран пӗшкӗнсе те пӑхрӗҫ. Акӑ шофер люк патне эхлете-эхлете шуса та ҫитрӗ. Часах унӑн мазутлӑ

аллисем, хура пичĕ курăнса кайрĕç. Вăл салона хăпарса çитсен пассажирсем чăтаймасăр ахăлтатса кулса ячĕç. Ара, шуйттан пекех курăнать вăл, вараланман вырăн та юлман ун çинче...

Часах хулана та çитрĕмĕр. Нумайăшĕ ассăн сывласа ячĕç. Пуриншĕн те питĕ йывăр рейс пулчĕ ку.

Манăн тепĕр шăматкун каллех яла каймалла: çывăх юлташ хăйĕн туйне чĕнчĕ. Шухăша путрăм. Каймалла-ши, çук-ши? А?..

# Улталарĕç

Чӳречерен шак-шак! шаккарĕç. Çемен, ĕçрен ытла та ывăнса килнĕскер, хытă çывăрса кайнă пирки ку сасса илтмерĕ. Арăмĕ - Тарье - пĕр самант шутласа выртрĕ те упăшкине аяк пĕрчинчен чавсипе чышрĕ:

- Тăр-ха, тăр, Çемен, такам чӳречерен шаккать.

Лешĕ йывăррăн хашлатса илчĕ те вырăн çинчен тăрса чӳрече патне утса пычĕ.

- Кам унта? - ыйтрĕ вăл.

- Юман кирлĕ мар-и? Юман сутатпăр,- илтĕнчĕ тĕттĕмрен сасă.

«Йывăçĕ ялта куллен кирлĕ те-ха, юманне вара уйрăмах тупма йывăр. Хапха юписем те кивелчĕç ĕнтĕ, тайăла пуçларĕç. Арăм ун пирки каласа хăлхана йĕрĕнтерчĕ ĕнтĕ. Нӳхреп те паян-ыран ишĕлсе анас пек тăрать. Хе, мĕнле ырă Турă çавăрса килчĕ-ха ку çынсене? Е тайлăк хапхана курчĕç-ши?»- вĕçсе илчĕç кил хуçи пуçĕнче шухăшсем çак темиçе çеккунт хушшинче. Унтан хăй çине пиншак уртса ярса урамалла тухрĕ. Чăнах та, КамАЗ машинăпа туллиех йывăç тиенĕ.

- Хуçа, юман кӳрсе килтĕмĕр сирĕн валли, урам вĕçĕнчи çамрăксем сирĕн пата ячĕç. Вĕсем сире тахçантанпах юман шыраççĕ терĕç,- текелесе пĕр арçын Çемен патнелле çывхарчĕ.

Кил хуçи йывăçа хаклас тесе машина çине улăхрĕ. Йывăççене тыткаласа пăхнă хыççăн анчĕ те: «Атьăр атьсем, çакăнта пушатар»,- тесе шăкилкке çумне кăтартрĕ. Хăй вара савăннипе арăмĕнчен укçа тата пулăштух илме пӳрте кĕрсе кайрĕ. Вăл тухнă çĕре самосвал машина пушă ларатчĕ, нушаланса пушатасси те пулмарĕ. Кил хуçи каçхи хăнасене мĕн ыйтнине йатса тухса пачĕ те, лешсем кабина ăшне вăр-вар кĕрсе ларчĕç. Машина уласа хускалса кайрĕ...

Ирхине Çеменсем патне кӳршĕ Элекçей килчĕ.

- Мĕн тума шутлатăн тата çак çăкасемпе, Çемен? Çĕнĕ мунча пурасшăн-и? - терĕ вăл.

- Мĕнле çăка? - тĕлĕнчĕ лешĕ.

- Вара шăкилкке çумĕнче выртаканнисем пирки калатăп. Ăна çĕркаç кӳрсе килнĕ пулас - ĕнер çукчĕ,- ăнлантарчĕ Элекçей.

Çемен ним чĕнмесĕр, васкаса урама тухрĕ, тӳрех вутă патне утрĕ. Ĕненменнипе йывăççене хыпашла-хыпашла пăхрĕ: çăках пулса кайрĕ иккен ку, хăш-пĕрисем çинче çулçисем те пур. Тинех Çемен хăйне палламан

çынсем çĕркаç шахвăртса хăварнине ăнланчĕ, хăйĕн йăнăшне туйрĕ. Тĕттĕмре çăкасем юман пекех курăнчĕç çав. Укçине те юманшăн тесе парса янă.

Çемен Элекçее ним калама аптрарĕ, нумай вăхăт хушши çĕрелле «юмансем» çине пăхса тăчĕ.

# Телей çулĕпе

Мехлюк Ваçлийĕн ачаранах ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ тинех пурнăçланчĕ: лавккана кайса хĕрлĕ тĕслĕ мотоцикл туянчĕ. Хурçă урхамах хĕвел çинче çулăм пекех ялкăшать. Анчах Ваçли, халиччен техникăпа туслă пулманскер, ун патне хăш майĕнчен пымаллине те пĕлмест. Мĕнрен тытăнас?

Часах вăл хăйĕнчен икĕ кил урлă пурăнакан Триньkка Ванькkине чĕнсе килчĕ. Лешĕ ăна мотоцикла мĕнле хускатса ямаллине кăтартса пачĕ. Ваçли транспорт çине утланса та ларчĕ. Мотоцикл хыттăн уласа илчĕ те тусан кăларса тапранса кайрĕ. Ваçли пуçĕ хыçалалла туртăнса илчĕ.

Акă вăл урампа вирхĕнсе пырать: пуçĕ каçăрăлнă, шĕвĕр сăмси çил кастарать. Кӳршисем сăнаса тăнипе чунĕ татах та çĕкленчĕ, вĕçсе кайманни кăна. Телей тени çитĕннĕ çынна та пĕчĕк ачана хавхалантарнă пекех çĕклет. «Юланутçă» часах хăйсем пурăнакан урамран тухса Çеремкассине кĕрсе кайрĕ, унтан Лаприкаспа çаврăнса килĕ умнелле çывхарчĕ. Кăштах мухтанса илес шухăшпа чарăнма шут тытрĕ. Анчах ак амак! Вăл мотоцикла мĕнле чармаллине те пĕлмест вĕт, ытла савăннипе тата васканипе ун пирки ыйтма та манса кайнă тапранас умĕн. Ваçли унталла-кунталла пăхса илчĕ те тусан парăлтаттарса килĕ умĕнчен иртсе кайрĕ. Инçетрен: «Чарăнма хăшне пусмалла?!» - тесе çеç кăшкăрма ĕлкĕрчĕ. Ванькка ăна ăнланмарĕ. Мотоцикл тепĕр хут çил касса ял хĕррипе çаврăнса тухрĕ. Хальхинче Ваçли çитсе пырас умĕнех кăшкăрма тытăнчĕ:

- Мĕнле чармалла?!

Çул хĕрринче тăракан Ванькка тинех мĕн пулнине ăнкарчĕ: вăл Ваçлие тормоз пускăчĕ ăçта иккенне тата мĕнле чармаллине калама ĕлкĕреймен.

Мотоцикл тепĕр хут вирхĕнсе иртсен Ванькка хăвăрт кăна Ваçли арăмĕ патне чупса кĕчĕ те мăшăрĕ мĕнле лару-тăрăва çакланнине каласа пачĕ. Мархва, чуста çăраканскер, малалла мĕн тумаллине çийĕнчех тавçăрса илчĕ. Витене чупса кĕчĕ те пĕр кивĕ тилхепе сĕтĕрсе тухрĕ. Унтан Ванькkапа иккĕшĕ çулăн икĕ айккине тăчĕç те тилхепене енчен енне карăнтарчĕç. Мотоцикл хăвăртлăхпа ун çине пырса кĕрсен иккĕшĕ те çул хĕрринчи тусан ăшне кĕрсе ӳкрĕç. Ваçли хурçă учĕпе канавалла анса кайрĕ, унтан вирхĕнсе тухса кӳршĕ Кĕтернен паян çеç çапнă навус кирпĕччисем çине кĕрсе кайрĕ. Хурçă урхамах кĕçенсе илчĕ. Ваçли: «Мархва, пĕтрĕм, пулă-ă-ш!» - тесе кăшкăрма çеç ĕлкĕрчĕ, йĕпе кирпĕчсем çине майлашса выртрĕ.

Мотор уланă сасă шăпланчĕ. Ваçли пурĕпĕр куçне уçма хăраса выртать-ха: хăй сывă-ши, вилнĕ-ши тесе шухăшлать. Мăшăрĕ чупса çитсе чусталлă та тусанлă аллипе питĕнчен ачашшăн сĕртĕнсен тин куçĕсене уçрĕ те хаш! сывласа ячĕ, сывă юлнăшăн хăй ăшĕнче çӳлти Турра тав турĕ...

Халĕ Мехлюк Ваçлийĕн тепĕр ĕмĕт çуралнă: вăл çăмăл машина туянасшăн...

# ТУПМАЛЛИ:

Пурнăç каçалăкĕнчен — поэзи уйне.......5

## САВĂСЕМ

### Чĕре тапнă чух

Мĕн пулчĕ-ши, этем, сана?.......8
Чĕре тапнă чух.......9
Ман шухăшсем — çунатлă акăшсем.......—
Эп чухăн-и.......10
Тĕнче патши пулма килмен.......11
Çурта çунать.......—
Ун чухне.......12
Вăхăтпа сăмах.......—
Чун сивви.......13
Куçна ан хуп.......—
Тус — тăшман.......14
Çăхан.......—
Пуш хирте.......15
Кĕтӳ.......—
Кашнин хăйĕн хуйхи.......16
Ватăлсан.......—
Чăвашлăх йывăçĕ.......17
Сăварта.......18
Çтаппан вилĕмĕ.......—
Ирĕклĕх йыхравçи.......20
Шăршлă путвалта.......21
Ĕç лаши.......—
Çынна ялан çитмест.......22
Пĕршайлăха çухатсан.......—
Ху пек пул.......23
Пин çыннăн — пин шухăш.......—
Çухатсассăн ху сăн-сăпатна... .......25
Йăнăшсем.......—
Бюрократ.......26
Маскарад.......—
Кашкăрсем.......27
Хăмпăсем.......28
Чăнлăхпа.......—
Çĕнĕ пушмак.......—
ВИÇЕ.......29
Хăратăп... хăравçăран.......—
Манра чăваш халăх пилĕ.......30

## МИНИАТЮРĂСЕМ

Ухмах ларсассăн пуçлăха.......31
Конвейер.......—
Тӳнтерле.......—
Кураймăр чĕркуççи çинче.......32
Тыткăнра.......—
Мул çитмесессĕн — эсĕ чухăн.......—

**Ачалăх ури йĕрĕ**

Çуралнă ялăм....................34
Чăваш хĕрарăмне....................35
Кукаçи....................36
Хĕллехи вăрманта....................37
Пушă çурт....................38
Пĕччен хурăн....................39
Кивĕ сукмак....................40
Тăван шкулти тĕлпулу....................—
Пăрçара....................41
Кĕрхи элеги....................43
Хĕл увертюри....................44

**Икĕ юрă**

Çĕнйĕлмелсен юрри....................46
Эсĕ килместĕн....................48

ЮПТАРУСЕМ

**Ку пурнăçра ху ăсупа пурăнмалла**

Ертÿçĕ Кăвакал....................51
Куракпа Кушак....................—
Кÿлĕ хĕрринче....................52
Чĕрĕппе Йĕкехÿре....................54
Чăрсăр Автан....................55
Темиçе йĕркен....................56
Савăнăç....................57

**Вырăсларан куçарнисем**

*С. Михалков*
Ăсчах Кушак аçи....................59
Чапшăн çунни....................—
*Г. Медведовский.*
Литконсультант практикинчен....................—
*Б. Пастернак*
"Чапа тухни вăл пит илемсĕр"....................60
*М. Корюн*
Ют çын ăнăçăвĕ....................61

**Халăх сăмахлăхĕ**

*(П. С. Быков алçырăвĕ тăрăх)*

Чеелĕх пулмасан — телейÿ пулмĕ сан....................63
Вăйçă Кирукпа шуйттан....................64

ЮМОРЕСКĂСЕМ

**Телей çулĕпе**

Забастовка....................69
Паллайман....................70
Кĕвĕçтересшĕнччĕ те....................71
Дежурство....................72
Йывăр рейс....................73
Улталарĕç....................76
Телей çулĕпе....................77

* * *

Тупмалли....................78

Николай Николаевич Ларионов

ЧЁРЕ ТАПНĂ ЧУХ
ПОКА БЬЕТСЯ СЕРДЦЕ

Стихи, басни, юморески
на чувашском языке

Редактор В. Ф. РОМАШКИН
Ответственный за выпуск Н. И. ДАВЫДОВА
Рисунок обложки Дамира БЕЛОУСОВА
Художник Д. БЕЛОУСОВ
Компьютерный набор С. М. ДОМИКОВА, В. А. ЕФИМОВА
Корректора Н. Н. ЛАРИОНОВ, В. Ф. РОМАШКИН

Сдано в набор 1.12.96. Подписано в печать 28.05.98. Формат 60x84$^{1}/_{16}$.
Бумага офсетная. Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная.
Усл. печ. л. 4,65. Уч. изд. л. 3,12. Тираж 1000. Заказ 1581.
Цена договорная.

Областное книжное издательство "Симбирская книга".
432063, г. Ульяновск, ул. Гончарова, д. 23.

ГУП облтипография "Печатный двор".
432061, г. Ульяновск, ул. Пушкарева, д. 27.

10=